25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
АПРЕЛЬ
9
КĔÇНЕРНИКУН
83(6018) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕТĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕТĔН ХАÇАЧĔ.

ФРОНТОВИКСЕН ÇЕМЬИСЕМШĔН ТĂРĂШМАЛЛА

Хĕрлĕ Çар умĕнче тăракан пархатарлă та мухтавлă задачăсем — совет çĕрĕсене нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсенчен хăтарасси — пирĕн боецсене геройла ĕçсем тума хавхалантараççĕ. Хĕрлĕ Çарăн тата Тинĕс-Çар Флотĕн воинĕсем хăйсен телейлĕ тăван çĕршывĕшĕн темĕн те тума хатĕр, вĕсем вилессине пăхмасăр, хăйсен тăван çĕршывне калама çук паттăррăн хӳтĕлеççĕ, урсах кайнă тăшмана татти-сыпписĕр пыра-пыра çапса, ăна хĕвеланăçнелле, каялла хăвалаççĕ. Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем Совет Союзĕн чапĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн, совет ачисемпе хĕрарăмĕсен телейĕшĕн, ашшĕсемпе амăшсен ырлăхĕшĕн нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ. Хăйсен тăван çĕршывне, хăйсен çемьине, хăйсен ачисене юратни совет воинĕсен вăйне ӳстерсех тăракан çăлкуç пулса тăрать.

Чи хĕрӳ çапăçусем пынă вăхăтра те боецсемпе командирсем хăйсен тăванĕсем çинчен шухăшлама пăрахмаççĕ. Килтен килекен ырă хыпарсем воинăн кăмăлне тата ытларах хăпартаççĕ, çавăн пек хыпар илнĕ хыççăн воин тата ытларах хавхаланса çапăçăва кĕрет.

Ленин—Сталин партийĕ, совет правительстви çар службинчи çынсемшĕн çине тăрса тăрăшаççĕ. Çар службинчи çынсем çине пĕтĕм халăх ăшшăн пăхать. Çемьере ĕçлеме пултараканнисене кашнинех ĕç параççĕ. Вĕсене çĕнĕ професси вĕренсе алла илме, хăйсен квалификацине ӳстерме май туса параççĕ. Боецсен, командирсен тата политработниксен çывăх тăванĕсене государство пособи парать. Çар служащийĕсен çемьисене вăрçă пыракан районсенчен инçетри тыла ăсатнă. Партипе правительство вырăнти организацисене фронтовиксен — пирĕн тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен çемьисене ăшшăн йышăнса кĕтсе илме хушать.

Боецсемпе командирсен тата политработниксен çемьисене чылайăшне Атăл тăрăхне, Урал, Сибирь тата Вăтам Ази районĕсене куçарнă. Унта пурăнакан халăхсем вĕсене хăйсен тăванĕсене, хăйсен çывăх çыннисене кĕтсе илнĕ пек кĕтсе илчĕç. Вĕсене хваттерсем, хутмалли вутă тата апат-çимĕçсем тупса пачĕç. Çар служащийĕсен арăмĕсем, ĕçлеме пултараканнисем, кашниех ĕç илчĕç. Ачисене чылайăшне ача-пăчасен учрежденийĕсене вырнаçтарнă. Фронтовиксен çемьисем хушшинче политикăллă воспитани ĕçне йĕркеленĕ. Фронтовиксен çемьисемшĕн мĕнле тăрăшмаллин тĕслĕхне Воронеж облаçĕнчи Бобровскпа Борисоглебск районĕсенчи совет организацийĕсем кăтартаççĕ. Унта куçарса пынă çемьесене пурне те тенĕ пекех хваттер тупса панă, çителĕклĕ таран вутă тата ĕçме-çиме хатĕрлесе хунă. Начальствующи состав арăмĕсем патĕнче тăтăшах политинформацисем туса ирттереççĕ. Çемьери членсене нумайăшне вырăнти учрежденисемпе предприятисене ĕçлеме вырнаçтарнă. Çакăн пек тĕслĕхсем ытти облаçсенче те сахал мар.

Анчах та çак пахаран та паха ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Куçса пынă çемьесене пур тĕлте те мар ăшшăн кĕтсе илнĕ. Вырăнти работниксем пурте мар-ха фронтовиксен ачисемпе арăмĕсем валли кирлĕ пек ĕçсем тунă. Боецсемпе командирсен тата политработниксен арăмĕсем пысăк йывăрлăхсем умĕнче тăни çинчен калакан уйрăм тĕслĕхсем те çук мар-ха. Фашистла пуçкасакансен тискер ĕçĕсенчен хăтăлас тесе, чылай çемьесен васкасах Совет Союзĕн шалти районĕсене тухса кайма тивнĕ. Вĕсен хăйсен пурлăхĕсене чылайăшне ĕлĕк хăйсем пурăннă вырăнах пăрахса хăварма лекнĕ. Çавнашкал çемьесем, паллах ĕнтĕ, вырăнти руководительсенчен пулăшу ыйтаççĕ. Анчах та çав пулăшăва пур çĕрте те мар-ха параççĕ.

Саратов облаçĕнчи ĕççынни депутачĕсен Совечĕн исполнительнăй комитечĕ «Путь к социализму» колхозăн председательне Тушкона тата Антоновски ялсовечĕн председательне Юдина куçса килнĕ çемьесем çине бюрократла пăхнăшăн ĕçрен кăларса, суд аллине панă. Çапла туни вăл питĕ те тĕрĕс. Хамăр тăван çĕршывăмăра хӳтĕлекен совет воинĕсен çемьисем çине сиелтен пăхакан çынсене ситех те хытă айăплама тивĕçлĕ. Хĕрлĕ Çар воинĕн кашни çемьинех пурăнма лайăх условисем тумалла. Çакна эпир тума пултаратпăр, тата ăна тумаллах. Шадринск хула Советне, фронтовиксен çемьисемшĕн ытă тупса хатĕрлеме тăрăшманскерне, нимĕнле те каçарма çук.

Фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшасси вăл—государствăн паха ĕçĕ пулса тăрать. Парти, совет тата профсоюз организацийĕсен кашниннех фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшмалла. Пирĕн воинăн çемьи хăйĕн пурнăçĕнче нимĕнле йывăрлăхсем те ан куртăр, боецсемпе командирсен арăмĕсем кашниех хăйсен пултарулăхне кура ĕç илччĕр, вĕсен ачисене вĕренме май пултăр. Мĕнпур çитменлĕхсене вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсем çине тӳнтерни ĕçрен пăрăнни кăна пулса тăрать. Парти, совет тата профсоюз организацийĕсен руководителĕсем çар служащийĕсен çемьисене çине тăрсах пулăшас пулсан, вĕсене никам та эсир пире ачар пăхатăр тесе калакан пулмĕ.

Акă, çавăн пек тĕслĕхсенчен пĕри. Новосибирск хула Совечĕн исполкомĕ çумĕнче ача-пăча пӳлĕмĕ организациленĕ. Кĕске срокрах 3.000 ачана тумлантарнă, çав ачасенчен чылайĕшĕсем красноармеецсен ачисем. Çав хуларах тата ачасем валли столовăй та уçăлмалла, унта куллен 8.000 çын валли апат пĕçерсе хатĕрлемелле. Хулан кашни пысăкрах çурт управленийĕ çумĕнчех ятарласа мастерскойсемпе артельсем организацилеççĕ. Шкулта вĕренмен вăхăтра ачасем кунта хула халăхĕн куллен-кунхи пурнăçĕнче кирлĕ тĕрлĕ хатĕрсене юсаççĕ, ача-пăча учрежденийĕсем валли хăвасенчен сĕтел ... укансем, фабрикăсемпе заводсен подсобный хуçалăхĕсем валли корзинкăсем тăваççĕ. Ку питĕ те лайăх пуçару, çак пуçарăва пур çĕрте те сарса ямалла.

Пирĕн çĕршывра воин çине, унăн çемьи çине кашниех юратса ăшă куçпа пăхать. Партипе совет организацийĕсем çар служащийĕсен çемьисен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе мĕн те пулсан тума йышăнччăр кăна—çавăнтах вĕсен пуçарулăхне хавасланса пулăшакан темиçе пин общественниксем тупăнаççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем боецсен çемьисемшĕн тăрăшни боецшăн, хамăра хӳтĕлекеншĕн тăрăшни пулса тăнине лайăх пĕлеççĕ, хамăра хӳтĕлекене хăйĕн тăван çĕршыв умĕнчи шанчăкне тӳрре кăларма, хăй тума тивĕçлĕ ĕçе лăпкăн та ăнăçлăн тума май памаллине вĕсем лайăх ăнланаççĕ.

Çуркунне çывхарса килет. Пирĕн ала çĕршывăн чылай районĕсенче ĕнтĕ çураки пуçланнă. Колхозсем хăйсене ялхуçалăхĕнчи ĕçсенче пулăшу пама пултаракан çар службинчи çынсен çемьисене тав тусах кĕтсе илĕç. Фронтран инçетри вырăнсенче оборона предприятийĕсен строительстви хĕрсех пырать. Вăрçă пыракан районсенчен куçарса килнĕ заводсемпе фабрикăсене ĕçе яраççĕ. Çак вырăнсенче те хĕрарăмсен вăйĕпе сарлакан усă курмалла. Боецсен, командирсен тата политработниксен арăмĕсем станоксем умне тăрса, фронт валли ытларах та ытларах хĕçпăшалсемпе боеприпассем туса хатĕрлеме тивĕçлĕ.

Пирĕн тыл Хĕрлĕ Çара тата Тинĕс-Çар Флотне татти-сыпписĕр пурнăç сĕткенĕ, хавхаланупа хăюлăх парса тăрать. Вăл совет хĕçпăшалне çĕнтерӳ тума пулăшать. Хĕрлĕ Çарăн тата Тинĕс-Çар Флотĕн шухăш-кăмăлĕ калама çук çирĕп. Фронтовиксем ялтан, килĕсенчен илекен хаваслă çырусем, хăйсен çемьисене лайăх пăхса усрани çинчен пĕлтерекен хыпарсем пирĕн тăван аннемĕр-çĕршывăмăрăн юратнă ывăлĕсен—совет воинĕсен наступлени тăвас хастарлăхне татах та çӳлерех çĕклĕç.

(«Правда», апрелĕн 8-мĕшĕнчи ум. статья.)

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 7-мĕшĕнче фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

Апрелĕн 6-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата аэродромсем çинче нимĕçсен 79 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 19 самолет пĕтнĕ.

* * *

Апрелĕн 6-мĕшĕнче пирĕн авиаци часĕсем нимĕçсен темиçе танкне тата бронемашинине, войскăсемпе грузсем туртса пыракан 100 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 30 яхăн лавне, 35 полевой тата зенитнăй орудине, зенитнăй пулеметсен 11 точкине, 10 минометне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, горючи хунă склада тата боеприпассем хунă склада сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи состава çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 2 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн стрелковăй часть (Хĕвеланăç фрончĕ), тăшман хаяррăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, тăшманăн оборона тытмалли рубежĕсенчен пĕрне йышăннă. 3 оруди, 8 пулемет, 7 автомат, радиостанци тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Окопсемпе блиндажсенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем 100 яхăн выртса юлнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часăн боецĕсем апрелĕн 6-мĕшĕнче пăшалсемпе пулеметсенчен персе противникăн 6 самолетне ӳкернĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн артиллери пенипе нимĕçсен артиллерин 4 батарейине, минометсен 5 батарейине пусарса лартнă тата пĕр танк çĕмĕрнĕ.

* * *

Кĕçĕн лейтенантăн Семенихинăн танкĕ пĕр кун хушшинче тăшмана 4 хутчен атакăланă. Паттăр танкист нимĕçсен танкне, танксене хирĕç пемелли 5 орудине, минометсен 2 батарейине, пулеметсен 3 точкине пĕтерсе тăкнă тата 8 блиндаж çĕмĕрнĕ. Çав участокрах кĕрешекен Кутшер лейтенантăн танкĕ пĕр кун хушшинче противникăн 2 танкне, танксене хирĕç пемелли 2 орудине тата пулемет точкине пĕтерсе тăкнă. Паттăр танкистсем противникăн чĕрĕ вăйне пысăк сиен кӳнĕ.

* * *

Красноармеец-поварсем Дмитриевпе Федоров малти позицие каçхи апат илсе пынă. Кĕтмен сĕртен вĕсем çине нимĕçсен 5 автоматчикĕ пеме пуçланă. Пĕлсе питех те лайăх маскировка тунă, çав красноармеецсем нимĕçсене хирĕç пеме тытăннă, тăватă нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн пĕр автоматчикне тыткăна илнĕ.

* * *

Польша территорийĕнче ĕнтĕ чылайранпа Казимир Соколинский ертсе пыракан партизансен отрячĕ кĕрешет. Польша патриочĕсем нимĕç çар чаçĕсене склачĕсем тата комендатурисем çине хăюллăн тапăнаççĕ. Январьпе февраль уйăхĕсенче отряд нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Партизансем нимĕç çарĕсен эшелонне тата 40 çити автомашинисене сирпĕнтерсе янă. Февраль уйăхĕнче Соколинский хăйĕн отрячĕпе пĕрле Н. районĕнче нимĕçсен аэродромĕ çине пырса кĕнĕ те нимĕçсен летчикĕсем çывăрнă пӳрт çине гранатăсем вăркăнтарнă. Пур гитлеровецсене те пĕтерсе тăкнă. Польша патриочĕсем аэродромра «Ю-52» йышши 3 транспортнăй самолета, бензинпа запас пайĕсен складне çунтарса янă.

* * *

Румынсен 18-мĕш пехотнăй дивизийĕн 92-мĕш полкĕнчи 8-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Александр Мареш çапла каласа панă: «Пирĕн батальон резервра тăратчĕ. Вырăссем пирĕн оборона линине татса кĕрсенех, офицерсем тарса çухалчĕç. Çав самантпа усă курса сержант Ремулус Груенку хăйĕн отделенийĕнчи салтаксене пухрĕ те каларĕ: «Тыткăна парăнар. Тыткăнра пире фронтринчен лайăхрах пулать», терĕ. Унпала пурте килĕшрĕç.

Вырăссем окопсем патнелле çывхарсанах, эпир алăсене çĕклерĕмĕр те тыткăна парăнтăмăр. Салтаксем питех те тарăхса çитнĕ. Хăшпĕрисем вăрçа хирĕç уççăнах калаçаççĕ. 8-мĕш ротăри 1-мĕш взводран кĕске вăхăт хушшинчех Павел Велическу, Кориолан Попеску тата Соломон Мику тарса çухалчĕç. Салтаксем Антонескуна темтепĕр каласа вăрçаççĕ. Пур салтаксем те ун çинчен вăл Румынин çарне Гитлера сутнă, тесе шутлаççĕ. Салтаксем пĕр-пĕрне çапла калаççĕ: «Мĕн пирки пирĕн Крымпа Украинăра пĕтмелле? Пирĕн кунта нимĕн тумалли те çук. Пире хамăртан Трансильванине туртса илнĕ венгерсене хирĕç ярсан нумай лайăхрах пулмалла», теççĕ».

* * *

Çурхи кунсем пуçланса кайнă май Германири хуласенче варпа шатраллă тиф чирĕ вăйлăн сарăлса пырать. Уйрăмăнах ютçĕршывсенчен илсе килнĕ рабочисем нумай чирлеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем лăках тулса ларнă таса мар бараксенче пурăнаççĕ. Ютçĕршывсенчен илсе килнĕ рабочисем чирлесен, вĕсене медицина тĕлĕшпе нимĕнле пулăшу та памаççĕ. Халĕ çакă паллă пулса тăнă: март пуçламĕшĕнче Гладбах хули çывăхĕнчи заводсенчен пĕринче гитлеровецсем шатраллă тифпа чирленĕ поляк, француз тата норвежец рабочисене 112 çынна вĕлернĕ.

Апрелĕн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем, малалла куçса пырса, нимĕçсене пысăк сиен кӳнĕ. Пĕр кун хушшинчи çапăçусенче кăна противникăн салтакĕсем 1.125 çын вилсе тата аманса пĕтнĕ. Изоновпа Шевчук пулеметчиксем тăшмана хирĕç сăргери пĕлсе тата вăйлăн çапăçаççĕ. Вĕсем иккĕшĕ противникăн 30 салтакне пĕтерсе тăкнă. Политрук заместителĕ Кузнецов нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 43 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем нимĕçсенчен вăйлăн çирĕплетнĕ хăтăх пурăнакан пĕр пункта туртса илнĕ. Ялăн урамĕсенче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен 250 вилли, çавăн пекех тата çĕмĕрĕлнĕ 7 танк, 4 оруди выртса юлнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен икĕ танкне, 6 орудине, 15 пулеметне тата минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă. Противник вилнисене шутласан кăна, хăйĕн 300 салтакĕпе офицерне çухатнă.

* * *

Пирĕн пĕр подразделенири снайперсем, Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекенскерсем, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç ăнăçлăн çапăçаççĕ. Снайпер Касьянов юлташ 79 гитлеровеца, Песковец юлташ 61 салтака, Никитасов юлташ — 40, Помазан юлташ — 37, Урванцев юлташ — 33, Минаков юлташ — 31 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Азов тинĕс таврашĕнчи партизансен пĕрлешнĕ темиçе отрячĕ мартăн юлашки кунĕсенче нимĕçсем йышăннă халăх пурăнакан пысăк пункт çине тапăннă. Партизансен малтан янă разведки ялтатне пымалли вырăнсенчи юханшывăн ĕвек çыранĕ тăрăх минăсем хурса тухни çинчен пĕлтернĕ. Партизансем вара чăнкă çыранран пырса кĕме шут тытнă. Вĕренсемпе усă курса партизансем чăнкă çыранран хăпарнă та çĕрле пĕр сехетре нимĕн систермесĕр яла пырса кĕнĕ. Тăватă сехет хушши пынă çапăçура партизансем нимĕçсен нумай салтакĕсене, 7 тоннăллă автомашинăна, прожекторпа телефон станцине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Противникăн полевой почтине тытса илсе, çавăнти корреспонденцисем хушшинче гитлерла тискер бандитăн Менг ефрейторăн вăл хăйĕн арăмĕ Фридпатне çырнă çырăва тупнă. Çав çыру уйрăмах тĕлĕнмелле. Аялараххра çав çырурăн уйрăм вырăнсене илсе пичетлетпĕр: «Эпĕ халĕ те Францирех тăрататăп тесе шутлатăн пулсан, эсĕ йăнăшатăн. Эпĕ ĕнтĕ Хĕвелтухăç фронтĕнче... Эпир вырăссенчен туртса илнĕ çĕрулмине тата ытти апат-çимĕçсемпе тăранса пурăнатпăр. Чăхсем пирки каласан, вĕсем ĕнтĕ çук... Эпир пĕр открыти турăмăр: вырăссем хăйсен пурлăхĕсене юрăйне пытараççĕ. Нумаях пулмасть эпир ор ăшĕнче тăварланă сысна ашĕпе село тултарнă пичке тупрăмăр. Кунсăр пуçне, эпир тата ăшă япаласем, костюм валли материал тупрăмăр. Çавнашкал япаласене эпир кунĕн-çĕрĕн шыратпăр. Кунта кашни вырăс, вăтă-и вăл, çамрăкĕ-и, арçын-и, хĕрарăм-и, вунă çулта-и вăл, ... е сакăрвунă çулта, — пурте вĕсем пирĕн тăшмансем. Вырăс халăхне пĕтерсе тăкма кăна тивĕçлĕ. Вĕсене пурне те, пĕр çын юлмиччен, вĕлерсе пĕтермелле».

Фашистла сĕтĕрнчĕк, Гитлерăн вылăх витинче тăрантарса ӳстернĕскер, мĕнпур совет çыннисене вĕлерсе пĕтересси çинчен ĕмĕтленет. Мăн сул çитичче вăрă-хурах канăç шырать. Иккĕленмелле кирлĕ мар, пирĕн боецсем çавнашкал менгсене тата гитлерла ытти бандитсене ĕмĕрлĕхех лăпланатарса канăç парĕç.

* * *

Франци патриочĕсем нимĕç оккупанчĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешеççĕ. Мартăн 31-мĕшĕнче Аррас-Дуэ çулĕ çинче Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне кайма тухнă нимĕç салтакĕсем ларса пыракан çар эшелонĕ ӳпăнса...

Юлашки 4-мĕш страницăра

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

54. **Ирина Никитична Золина**—Сĕнтĕр районĕнчи Юнкă ялсоветне кĕрекен «Новая Юнга» колхозри 2-мĕш бригадăн бригадирĕ. Золина юлташăн бригади çуракинче акма кирлĕ вăрлăха йăлтах сортласа хатĕрлесе хунă, акма юрăхлă кондицие çитернĕ. Мĕнпур ялхуçалăх машинисене, инвентаре, кӳлмелли хатĕрсене пысăк пахалăхпа юсанă. Хирe 1.156 лав тислĕк кăларнă, 30 центнер кĕл, 18 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

55. **Евдокия Николаевна Виноградова**—Сĕнтĕр районĕнчи Юнкă ялсоветне кĕрекен «Новая Юнга» колхозри 4-мĕш бригадăн бригадирĕ. Виноградова юлташăн бригади вăрлăха çуракинче акма кирлĕ чухлĕ пĕтĕмпех хатĕрлесе, сортласа хунă, акма юрăхлă кондицие çитернĕ. Мĕнпур ялхуçалăх машинисене, инвентаре, кӳлмелли хатĕрсене пысăк пахалăхпа юсанă. Бригада хирe 1.235 лав тислĕк тăкнă, 35 центнер кĕл, 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

56. **Вăрнарти машинно-тракторнăй станци** (МТС директорĕ **П. О. Осипов** юлташ, политотдел начальникĕ **В. Романов** юлташ, старши механик **В. Ф. Ремизов** юлташ). МТС тракторсем юсамалли плана пурнăçа кĕртнĕ, тĕрлĕ маркăллă 20 трактора капитальнăй ремонт, 34 трактора текущи ремонт тунă тата 3 трактора техника тĕлĕшĕнчен пăхса тухнă.

Плансенче кăтартса панă нормăсем тăрăх 57 трактора юсама 65.614 тенкĕ укça расходламалла пулнă, ĕçре 30.699 тенкĕ кăна расходланă, çапла вара 34.915 тенкĕ перекетлесе хăварнă.

МТС тракторсен çуркуннехи ĕçĕсен планне пурнăçа кĕртмешкĕн горючи, сĕрмелли материалсем тата газогенераторнăй тракторсем валли топливо пĕтĕмĕшпех çителĕклĕ хатĕрлесе хунă. Тракторсен бригадисенче пуринче те кадрсем çителĕклĕ. Çак çулта МТС тракторист пулма 71 çынна вĕрентсе хатĕрленĕ, вăл шутра 40 хĕрарăм.

Тракторсем юсас ĕçре уйрăмăнах çак юлташсем хăйсене палăртрĕç: механиксем—**В. Ф. Ремизов, П. Е. Николаев, И. А. Алексеев**, тимĕрçĕ **А. С. Волков**, токарь **И. П. Корнюхов**, бригадирсем—**Е. К. Кириллов, П. И. Иванов, Н. И. Чернов**, трактористсем—**А. Т. Трофимов, Е. А. Арсентьева, В. К. Капирова, Т. З. Захарова, А. А. Чаркова, П. З. Захаров, С. З. Захаров, И. Я. Крипцаков, Ф. Ф. Флегантов, К. Ф. Фомин** т. ыт. те.

Машинно-тракторнăй станци юсав компанийĕ вăхăтĕнче тракторсен запас пайĕсене 13.394 тенкĕлĕх киввисене юсаса çĕнетнĕ тата çĕнĕрен тунă, план тăрăх вĕсене çулталăкра 11.200 тенкĕлĕх хатĕрлемелле пулнă, çапла МТС ку енĕпе çулталăк планне 110 процент тултарнă.

Халĕхи вăхăтра машинно-тракторнăй станцире комбайнсен моторĕсене, молотилкăсене тата ытти ялхуçалăх машинисене юсас ĕç пырать, машинăсене техника тĕлĕшпе пăхса тăма кирлĕ инструментсемпе материалсене пĕтĕмĕшпе пухаççĕ.

57. Вăрнар районĕнчи Уравăш ялсоветне кĕрекен Киров ячĕпе тăракан колхоз (колхоз председателĕ **А. И. Иванов** юлташ). Колхоз çуракинче акма кирлĕ вăрлăха пур культурăсем енĕпе хатĕрлесе сортласа хунă, вĕсене пурне те акма юрăхлă кондицие çитернĕ. Плугсене, сӳресене, сеялкăсене тата транспорт инвентарьне пĕтĕмпех юсанă. 40 центнер сульфат-аммоний, 194 центнер фосфорит çăнăхĕ туртарса килнĕ. 50 центнер кĕл, 24 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 5.000 лав тислĕк хатĕрленĕ. Колхозри лашасем пурте аван, мăнтăр.

Çуракине хатĕрленес ĕçре хăйсене уйрăмăнах çаксем палăртрĕç: 2-мĕш бригада (бригадирĕ **В. К. Кузьмин** юлташ), 1-мĕш бригада (бригадирĕ **А. П. Павлов** юлташ), конюх **Н. К. Лукошкин** юлташ.

Строительство Наркоматĕн 2-мĕш номерлĕ трестĕнче ĕçлекен рабочисене, инженерно-технически работниксене, служащисене тата ертсе пыракан работниксене наградăлани

Строительство тĕлĕшпе Правительство панă заданисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх Строительство Наркомачĕн 2-мĕш номерлĕ трестĕнче ĕçлекен рабочисене, инженерно-технически работниксене, служащисене тата ертсе пыракан работниксене наградăланă:

Ленин орденĕпе — 6 çынна;

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — 17 çынна;

«Знак Почета» орденĕпе—47 çынна;

«За трудовую доблесть» медальпе — 44 çынна;

«За трудовое отличие» медальпе — 41 çынна наградăланă. (ТАСС).

„Пионер Чувашии" танк тума

ШАХАСАН. Районри шкул ачисем Етĕрне хулинчи çамрăк патриотсен чĕнĕвне хапăл туса йышăнчĕç. Шуркасинчи тата Шăхасанти вăтам шкулта вĕренекенсем танк тума 665 тенкĕ пухса пачĕç.

«Пионер Чувашии» танк тунă çĕре укçа пухас ĕçе шкул ачисемпе пĕрлех колхозсенчи активистсем те хутшăнаççĕ. Максим Горький ячĕпе тăракан колхозри коммунистсемпе комсомолецсем танк тума 200 тенкĕ пухса панă.

А. АГИМ.
Г. ШАШКОВ.

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатĕнче

Кăçалхи апрелĕн 6-мĕшĕнче Швеци посланникĕ г. Ассарсон Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместительне А. Я. Вышинский юлташа Швеци правительствин ячĕпе меморандум панă. Çав меморандумра совет самолечĕ Хапаранда хули çине бомбăсем пăрахнă тесе тата çав самолет çинчен Швеци территорийĕ çине листовкăсем пăрахса, çапла вара Швецин нейтралитетне пăснă тесе протестленĕ. Кăçалхи апрелĕн 7-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ А. Я. Вышинский юлташ, Совет Правительстви хушнă тăрăх, çав меморандум çине Швеци посланникне г. Ассарсона çакăн пек ответ панă:

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ, Швеци миссийĕ кăçалхи апрелĕн 6-мĕшĕнче панă меморандум çине ответлесе, Совет Правительстви хушнă тăрăх çакна пĕлтерме тивĕçлĕ тесе шутлать: совет... пĕр самолечĕ те Хапаранда хули тĕлĕнче вĕçмен тата Швеци территорийĕ çине бомбăсемпе листовкăсем пăрахман.

Швеци правительстви, бомбăсемпе листовкăсем пăрахнă самолет совет самолечĕ пулнине çирĕплетсе парас тесе, хăйĕн истинче çакнашкал обстоятельствăсене кăтартса парать: бомбăсен ванчăкĕсем çинче вырăс саспаллийĕсем пулнă пулать, листовкăсене вара вырăс тата нимĕç чĕлхисемпе пичетленĕ пулать тата çав листовкăсенче Совет Союзĕ енне куçма чĕнсе çырнă пулать.

Совет Правительстви çӳлерехре кăтартнă обстоятельствăсем асăннă самолет Совет Союзĕн пулнине нихăш енчен те çирĕплетсе пама пултараймаççĕ тесе шутлать, мĕншĕн тесен гитлеровецсемпе вĕсен Финляндири тарçисем вырăс буквисемпе пичетленĕ е совет ытти паллисемпе палăртнă япаласемпе усă курни тата вĕсем тĕрлĕрен листовкăсем, çавнашкал листовкăсем советăн пулса тăнă пек кăтартса, сарни— çав господинсем анлăн усă куракан провокациллĕ ĕçĕн меслечĕсенчен пĕри пулса тăрать. Паллах, ку çарра та асăннă ĕç çавнашкал меслетпе тунăскерех пулнă.

Çӳлерехре кăтартса панисене шута илсе тата тивĕçлĕ органсем тĕрĕслесе палăртнă тăрăх, Совет Правительстви çакна пĕлтерет: Швеци правительствин кăçалхи апрелĕн 6-мĕшĕнче панă нотине кăтартнă ĕç шатне совет авиацийĕ нихăш енчен те пырса тĕкĕнмест, çавна пула ĕнтĕ Совет Правительстви Швеци правительстви панă протеста йышăнма пултараймасть.

Америка посолĕ г. Вильям Стендли килсе çитнĕ

Апрелĕн 7-мĕшĕнче Куйбышев хулине Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ССР Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ г. Вильям Стендли килсе çитнĕ.

Стендли господина çаксем кĕтсе илнĕ: Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Америкăри çĕршывсем тĕлĕшпе ĕçлекен отделĕн заведующийĕ Г. Н. Зарубин юлташ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн протоколсен отделĕн заведующийĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Г. И. Фомин юлташ, Америка ĕçĕсен повереннăйĕ господин Торсон пуç пулса тăракан Америка посольствин составĕ, çавăн пекех тата Китайăн посолĕ г. Шао Ли-Цзы, Великобританин посолĕ г. Кэрр, Норвегин посланникĕ г. Андворд, Польша посольствин советникĕ г. Сокольницкий тата ыттисем те.

Японин ССР Союзĕнчи посолĕ господин Н. Сато верительнăй грамотăсем пани

Апрелĕн 7-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **М. И. Калинин** юлташ Японин ССР Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолне Н. Сато господина йышăннă. Н. Сато М. И. Калинина хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончěсенче

Танксен десанчě яла тытса илме пулăшрě

КАНТĂР-ХЕВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĚ, апрелěн 6-мěш. (ТАСС спецкорě). Нимěçсем контратакăна хатěрленнě. Хăйсен резервне пухса, вěсем каçранах пирěн позицисем çине пеме тытăннă. Артиллерирен пенě хыççăн, сывлăшра фашистсен штурмовикěсемпе бомбардировщикěсен темиçе звени курăнса кайнă. Сăрт хыçěнчен тÿрех пирěн боецсем йышăннă вырăна тăшман танкěсем шунă. Вěсем хыççăн пехота пынă.

Танкистсемпе пехотинецсене тăшманăн контратакине сирсе пăрахма тата яла çавăрса илме задани панă. Нимěç самолечěсем пирěн пехотăна çěр çумне лапчăтайман. Боецсем тăшманăн авиацине хирěç кěрешме хăнăхса çитнě ěнтě. Вěсем зенитнăй установкăсенчен, ручной пулеметсенчен, винтовкăсенчен тата танксене хирěç пемелли пăшалсенчен вăйлăн пеме тытăннă. Нимěç самолечěсен хастарлăхě сÿнсе ларма тытăннă, пирěн истребительсем вěсене хирěç тăвăллан ыткăннă. Сывлăшра хаяр çапăçу пуçланса кайнă.

Çав вăхăтра пирěн боецсем, нимěç танкěсемпе пехотине сывăха ярса, вěсем çине малтанах хатěрлесе хунă позицирен вăйлăн пеме тытăннă. Фашистсем умěнчи çěр минометсемпе артиллери снарячěсем çурăлнипе капанăн-капанăн пěлěтелле ывтăннă. Тăшманăн контратаки пăчланма тытăннă. Пирěн танкистсемпе пехотинецсем пуçарулăха тăшман аллинчен тытса илсе, тăшмансене каялла хăвалама тытăннă. Фашистсене хăваласа пырса, вěсем халăх пурăнакан пункт патне çывхарнă. Çав яла часть командирě танксен десанчěпе усă курса çавăрса илме шутланă.

Каç пулса килнě. Операцие каймалли танксем çине боецсем вырнаçнă. Танксем ял еннелле ыткăннă. Вěсем яла хěвелтухăç енчен çěмěрттерсе пырса кěнě. Вěсем çавтери хăвăрт пырса кěнипе нимěçсем хăйсен танка хирěç пемелли артиллерийěне миномечěсене те ěçе ярайман. Танксем тăшманăн огневой точкисене çěмěрнě вăхăтра боецсем, ял тăрăх сапаланса, тăшмансен дзочěсем пулнă çуртсене тыта-тыта илнě. Рота командирě Семен Ромоданов хăйěн боецěсемпе пěрле тăшманăн çирěплетнě точки çине тапăнса, ун çине гранатăсен сыххине пăрахнă. Çав операцире хăюллă командир хăй аллипе 30 фашиста тыткăна парăнманскерсене, вěлернě. Тăшман, çакăн пек вăйлăн тапăнасса кěтменскер, каялла чакнă. Хăраса ÿкнě гитлеровецсем ялваррине тарса пухăнса çак вырăнта пирěн боецсене хирěç тăма хăтланнă. Вěсене нимěç командованийě танксемпе пулăшу парса хăюлатнă. Свастикăллă пěрремěш танк курăнсанах, лейтенант Семенов, пирěн десантри пěр машинăна ертсе пыраканскер, çав танк çине вутлă çăмăр сутарма тытăннă. Икě хутчен персех вăл тăшманăн танкне вут тивертсе янă. Çакăн хыççăн Семенов юлташ нимěçсен танка хирěç пемелли орудийěсене аркатма тытăннă. Тăшманăн орудийěсенчен иккěшě çавăнтах шăп пулнă.

Çак операцире танка хирěç пемелли орудисен расчечěсем питě лайăх ěçленě. Оруди командирěсем — Пучинпа Акимов юлташсем, питě те тěл персе, тăшманăн икě танкне стройран кăларнă. Ытти танксем вара каялла чакса пирěн пехота çине тепěр енчен пыма шутланă. Анчах та пирěн боецсем, фашистсен танкěсене хирěç кěрешме вěренсе çитнěскерсем, вěсене танксене хирěç пемелли пăшалсенчен персе кěтсе илнě. Кучкуркин юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделени гранатăсемпе тата çунакан шěвек тултарнă бутылкăсемпе тăшмансен икě танкне пěтерсе тăкнă.

Сасартăк пырса тапăнни, десант операцине пěлсе йěркелени, танкистсемпе пехотинецсем пěр-пěрне вăхăтра тата пěлсе пулăшу пани, çапăçура пěр-пěрне пулăшни — çаксем май панă ěнтě совет боецěсене пысăк çěнтерÿ тума. Нимěçсене хăйсен çирěплетнě вырăнěнчен хăваласа кăларнă. Пирěн войскăсем тытса илнě трофейăсем шутěнче—нимěçсен 7 танкě.

З. ЛИПАВСКИЙ.

Сайра-хутра пулакан операци

Фронт участокěсенчен пěринче наступлени тунă чухне красноармееца Николай Быстриков юлташа минăпа амантнă. 50 миллиметрлă мина çурăлса каймасăр Быстриков юлташăн сылтăм хулпуççине витěрех шăтарса тухнă, хулпуççи шăммине çěмěрсе кěрсе, мускулсем хушшине чăрăнса ларнă. Быстриков юлташ, хăй ÿчě ăшěнчи çурăлса кайма пултаракан мина унăн сывлăхěнчи сынсемшěн хăрушă япала пулса тăнине пěлсе, хăйне хăй взрыв туса сирпěнтерсе яма тăнă, анчах çавăнтах тăнсăр пулса ÿкнě. Ăна санитарсем тупнă. Хуллен, питех те асăрханса, вěсем ăна медсанбата йăтса çитернě. Минăна сиенсěрлетме пěлекенсем çывăхра никам та пулман. Медсанбатăн комиссарě Мордвинов юлташ тата дежурнăй хирург 2-мěш рангри военврач М. Б. Пахман юлташ хăюллă решени йышăннă: халех операци тумалла. Питех те асăрханса, тěлěнмелле мастерлăх кăтартса, Пахман юлташ аманнă Быстриков юлташăн ÿтěнчен çурăлса кайман минăна кăларса илнě. Быстриков юлташ çак операцие питех те тÿсěмлě чăтса аван ирттерсе янă. Халě вăл тÿрленсе сывалса пырать. Çакăн пек операци вăл—çар хирургийěн историйěнче малтанхи хут пулнă пěртен пěр операци.

Укерчěк çинче: аманнă красноармеец Николай Быстриков юлташ хулпуççи мускулěсем хушшине кěрсе ларнă минăна кăларса илес умěн медсанбатра выртать.

28 герой-гвардеецсен примерěпе

ÇУРÇĚР-ХĚВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĚ, апрелěн 4-мěш. (ТАСС спецкорěсем). Тăшман тактика тěлěшпе паха вырăн йышăнса тăракан ял çине урса кайсах тапăннă. Çав наступление тăшман пěр батальон пехота кěртсе янă, пехотăна 5 танк тата артиллери пулăшса пынă. Кěçěн лейтенант Никифоров командир пулса тăракан оруди расчечě тапăнса килекен нимěçсене хирěç малалла тухнă. Орудине усă позицие вырнаçтарса, артиллеристсем тÿррěн тěллесе тăшмансем çине пеме тытăннă. Малтанхи снарядсемех тăшманăн икě танкне пěтерсе тăкнă. Çапла пулсан та çав танксем хыççăн пыракан пехота çаплах малалла ыткăннă.

— Фашистла сволоча картечьпа ăшалăр! — команда панă Никифоров.

— Çапла, картечьпа! — тесе ответленě сержант Крылов.

Нимěçсен артиллерийě, хăйсен пехоти пысăк та хăрушă йывăрлăхпа тěл пулнине курса, орудин паттăр расчечě çине тăвăллăн пеме тытăннă. Орудие çěмěрсе тăкнă. Çакăн хыççăн тăшманăн пехоти каллех малалла шăвăнма тытăннă. Çичě паттăр боец тăшман унки варрине кěрсе юлнă пулин те, винтовкăран персе фашистсене пěрне те хăйсем патне яман.

Çичě артиллерист çине нимěçсем хăйсен вăммăн танкěсене янă, анчах та паттăр артиллеристсем çапах та каялла чакман. 28 герой — гвардеецсен образě вěсене хавхалантарса, вăй парса тăнă. Паттăр вырăс артиллерисчěсем — кěçěн лейтенант Никифоров, сержант Крылов, наводчик Потапов, установщик Демик, замковăй Иваненко, тупă авăрлакан Терентьев тата Трумин — чăн-чăн геройсем пек хăйсен тăван çěршывěшěн çапăçса вилнě. Çěршыв вěсен мухтавлă ěçне ěмěр-ěмěр манмě.

Нимěçсен авиацийě пысăк çухатусем тÿсет

ÇУРÇĚР-ХĚВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĚ, апрелěн 7-мěш. (ТАСС спецкорě). Совет летчикěсем тăшманăн авиацине кунран кун хаяррăнрах пыра-пыра çапаççě, аркатмаллах çěмěреççě. Пирěн авиаци пěр кун хушшинче сывлăшри çапăçусенче тата çěр çинче нимěçсен 41 самолетне пěтерсе тăкрě. Икě кун хушшинче пирěн фронтра, туллимар даннăйсем тăрăх, нимěçсен авиацийě 61 самолет çухатнă. Çав шутран 19 самолетне сывлăшри çапăçусенче персе антарнă (кунта бомбардировщиксем, истребительсем тата транспорт машинисем кěреççě), 42 самолетне аэродромсем çинче аркатнă. Вěсем пурте виççě моторлă «Юнкерс—52» йышши транспорт самолечěсем.

Совет летчикěсен вăрçăри ěçěсем

ХĚВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĚ, апрелěн 6-мěш. (ТАСС спецкорě). Çак участокра фронт линийě юханшывăн чăнкă çыранě тăрăх пынă. Меллě вырăнпа усă курса, фашистсем хăйсен позицине вăйлă çирěплетнě, вěсем мěн çуркунне пуçланичченех çак вырăнта тăрасшăн пулнă. Анчах та пирěн чаçсем тěплěн хатěрленнě те оборонăн çав линине татса кěнě, халě вěсем халăх пурăнакан пунктсене пěрин хыççăн тепěрне нимěç оккупанчěсенчен тасатса пыраççě.

Çěр çинчи чаçсене малалла куçса пыма пирěн авиаци пысăк пулăшу парать. Летчиксем тăшманăн çирěплетнě вырăнěсене аркатаççě, унăн техникипе чěрě вăйне пěтерсе пыраççě.

Пěр пунктра пирěн пехотăн атакине фашистсен миномечěсем чăрмантарса тăнă. Пилěк самолет-истребительсем пехотăна пулăшма вěçсе тухнă. Самолетсем çав пункт урлă темиçе хутчен те вěçе-вěçе каçнă, аялтанах тăшманăн минометнăй батарейисем çине снарядсемпе пульăсем çутарма тытăннă. Тăшманăн миномечěсем шăпах пулнă. Пирěн пехота малалла ыткăннă, тăшмана лутăркаса пăрахнă. Питех те кирлě паха пункта пирěн чаçсем йышăннă.

Тепěр участокра пирěн разведчиксем тăшман юханшыв урлă хăйěн чаçěсене каçарнине асăрханă. Каçхи бомбардировщиксен икě экипажне—Стижненкопа Поздиев летчиксене тата Щемелинпа Григорьев стрелоксене—каçмалли вырăна бомба пăрахса аркатса тăкма задани панă.

Çěрлехи тěттěмре пирěн бомбардировщиксем каçмалли вырăн патне пынă, темиçе хут ун çийěпе вěçе-вěçе иртнě, бомбăсем шăп кирлě çěре ÿкнě. Тăшман хăйěн вăйěсене текех ку енне каçарайман.

Çав кунах фронтăн çак участокěнче пирěн летчиксем тăшманăн икě танкне пěтерсе тăкнă, сăнав аэростатне персе антарнă, тăшман пехотине икě ротăна яхăн пěтернě.

Авиаци подразделенин личнăй составне, хăйсен заданине ăнăçлăн пурнăçланăшăн, командовани тав тунă.

Старши политрук М. КУТЕЛЬМАН.

Çуракине большевикла хатěрленер

Лаша çуракин ăнăçлăхне татса парать

Ěç выльăхěсене çуракине тухма хатěрлесси пирěн умри тěп задачăсенчен пěри пулса тăрать. Мěншěн тесен лаша тěреклě пулнинчен çуракине срокра тата пахалăхлă ирттересси килет. Пирěн лашасем начар пулсан, паллах, çураки вăрăма тăсăлма пултарать. Çакна Тăвай районěнчи чылай колхозсен председателěсем халичченех кирлě пек ăнланса илмеççě-ха. Районри колхозсенче начар, вăйсăр лашасем чылай. Уйрăмах лашасене çуракине хатěрлес ěç Чÿкçырминчи «Коммунар», Лачкассинчи «Звезда», Вăрманхěрринчи «Красное Сормово», Вырăс Нăрвашри «Культура» колхозсенче начар тăрать. «Коммунар» колхоз хальхи вăхăтра 63 лаша тытса тăрать пулсан, вěсенчен начаррисем 24 шутланаççě, çавăн пекех «Красное Сормово» колхозра та 50 лаша, «Звезда» колхозра 32 лаша ěçе тухма вăйсăр. Çапла пулсан та, çак колхозсен руководителěсем лашасене самăртма тăратассишěн, вěсене уйрăмăн пăхассишěн тăрăшмаççě.

Чылай колхозсенче ěç выльăхěсем çине чунсăррăн пăхасси пěтмен-ха. Лашасене пěр хěрхеммесěр кирлě-кирлě мар ěçе турткалаççě, çапса хěнес йăлана халě те пăрахмаççě. Лашасем начаррин тепěр сăлтавě вăл — лашасене лайăх тăрантарманни пулать.

Çураки çитесси инçе мар. Унччен пур лашасене те вăйлатмалла. Лайăхрах апат çине тăратмалла. Кăна тума лашасене юратакан тата вěсене пăхма пěлекен колхозниксене хушмалла.

Çуракинче ěçлеме çамрăк лашасене, вăкăрсене тата хěсěр ěнесене ěçе кÿлме вěрентмелле. Ку тěлěшпе районра 370 çамрăк тихасене кÿлме вěрентмесěр пуçне халь нимех те туман-ха. Кÿлме юрăхлă тихасемпе вăкăрсем татах та пур. Вěсене пурне те ěçе вěрентсе, çав мăл ěçсенче те пулин усă курмалла тăвас пулать.

В. ЧЕРНОВ.

Тăвай МТС политотделěн начальникě.

Çуракине—вăйлă лашасем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Типçырмари Дмитров ячěпе тăракан колхоз членěсем çуракине вăйлă лашасемпе тухма хатěрленеççě. Лашасене апат хушса панă, начартараххисене уйрăм апат çине тăратнă.

З. ВАСИЛЬЕВ.

„Гигант“ колхозра хěрÿллě ěç пырать

ВĂРНАР. Сентимеркăри «Гигант» колхоз членěсем çуракине хатěрленеççě, вăйлă тырпул туса илессишěн пěтěм пултарулăха хурса ěçлеççě. Çуракине пысăк пахалăхпа ирттерес тесе вěсем Кěçěн Кипек колхозне ăмăртăва чěннě. Пěр-пěрин ěçěсене тěрěслесе тăма çак колхозсем хушшинче «За родину» ятлă стена хаçачě тухса тăрать.

«Гигант» колхоз çуракине хатěрленнě май уя 1200 лав тислěк кăларнă, 89 центнер кěл, 39 центнер кайăк-кěшěк тислěкě, 33 тонна торф турттарса хатěрленě.

Пěрре çапла каç пулас умěн колхоз канцелярине пěр ушкăн хěрарăмсем пырса кěчěç. Вěсем колхоз председательне Черньшев юлташа хăйсем паян вăрмантан вутă турттарса килни çинчен каласа пачěç. Ыран мěнле ěç тума кирли çинчен ыйтрěç. Колхоз председателě вěсене торф турттарма кайма хушрě. Çапла «Гигант» колхозра кашни колхозник, колхозница куллен тăрăшса ěçлет.

Ял варринчи çырма хěрринче колхозăн тимěрç лаççи ларать. Вăл яланах уçă, унта кулленех хěрÿллě ěç пырать. Колхоз тимěрçи Скворцов юлташ çак иртнě кунсенче 36 плуг, 25 сÿре, 2 жнейка тата ытти машинăсене те юсарě.

Колхоз çуракинче акмалли вăрлăхсене сортласа тивěçлě кондицие çитерně. Вăрлăхсен шăтас пахалăхě аван. Вăрлăхсене тасатнă çěрте К. Краснова, М. Семенова колхозницăсем питě тăрăшса ěçлерěç.

Колхозăн кантăр тата йěтěн вăрлăхěсем çитмеççě. Вěсене çак кунсенчех çывăхри колхозсенчен улăштарса илеççě.

Лаша таврашěсем тата çунасемпе урапасем юсас тěлěшпе колхозра уйрăм çын ěçлет. Вăл—Кирилл Кузьмин. Вăл хăмăтсене тата лаша кÿлмелли ытти хатěрсене юсаса çитерчě. Çěмěрěлнисене çийěнчех юсаса пырать.

Н. ЗАХАРОВ.

Çамрăксем тыră сортлаççě

СЕНТЕРВĂРРИ. «Мěн акатăн—çавă шăтать»—тенě ваттисем. Çакă вăл пурнăçра пěрре çеç мар тěрěсленнě. Çěньял Йěрхçырминчи Сталин ячěпе тăракан колхоз çамрăкěсем çакна лайăх пěлеççě. Вěсем çуракине тухма хатěрленсе, чи малтан вăрлăхсене тасатса сортлама тытăнчěç. Вăрлăх сортланă çěрте вěсем бригадăсем организацилеснě. Л. Петров, А. Кузьмин, В. Данилов, Е. Иванов, Н. Андреева çамрăксем, колхозра çěрěн-кунěн ěçлесе, акма кирлě вăрлăхсене пурне те сортласа çитерчěç. Пăрçа-ясмăксене алăпа пěрчěн суйларěç.

Çамрăксем çуракине хатěрленес ěçре ытти колхозниксене пример кăтартаççě. Вěсем хěрÿллě ěçленине кура ытти колхозниксем те лайăхрах ěçлеме пуçларěç.

— Вăрçă пынă вăхăтра епě те килте лармa пултараймастăп. Вăй çитнě таран пирěн те ěçлес пулать, тет ватă колхозница Ирина Иванова. Вăл хăйěн виçě ывăлне Хěрлě Çар ретне нимěçсен урнă бандисене хирěç çапăçма ăсатнă. Иванова колхозница сур центнер пăрçана пěрчěн сортласа пачě.

Çуракине хатěрленес ěçре шкулта вěренекен ачасем те лайăх ěçлеççě. Е. Давыдов, Р. Михайлов çамрăк ачасем 10 центнер кěл, 12 центнер кайăк-кěшěк тислěкě пухнă.

А. РАЗИН.

Пахча-çимěç мастерěсен курсě

ЕТĚРНЕ. Ялхуçалăх техникумě çумěнче çак кунсенче пахча-çимěç тăвакансен курсě пулса иртрě. Курсра пурě 28 колхозник вěренчě. Вěсем купăста, сухан, кишěр, хăяр çимěçсене мěнле майпа хăвăрт туса илмелли çинчен вěренчěç.

П. КРАСНОВ.

ЧĂРМАВ УМĚНЧЕ ЧАРĂНСА ТĂМАÇÇĚ

Первомайски районри Ворошилов ячěпе тăракан колхозра ялхуçалăх машинисене юсас ěç тимěрçě çук пулнипе чарăнса тăнă. Колхоз председателě Протасов юлташ машинăсене юсама çывăхри колхозăн тимěрçне Сергей Мокейчева чěннě.

Мокейчев юлташ, куллен тимлěн ěçлесе, вунă кун хушшинче 26 плуг, 18 сÿре тата икě сеялка лайăх пахалăхпа юсаса панă.

Т. НИКИТИН.

ĚÇ ХĚРÿЛЛĚН ПЫРАТЬ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Исаково» колхозра çуракине хатěрленес ěç хěрÿллěн пырать. Колхоз ялхуçалăх машинисене юсаса çитерně. Колхозниксем халě тыră сортлас ěçре тăрăшса ěçлеççě.

Колхоз кăçалхи çуракине тутă та вăйлă лашасемпе тухма тăрăшать. Конюхсем пěр-пěринпе ăмăртса ěçлеççě. Уйрăмăнах А. Егоровпа И. Ефимов комсомолецсем пăхакан лашасем мăнтăр. Халě конюхсем тихасене кÿлсе çÿреме вěрентеççě.

Н. ПЕТРОВ.

Подсобнăй хуçалăхсем организацилеме пулăшмалла

ÇĚРПУ. (Хамăр корр.). Çěрпÿ хулинче подсобнăй хуçалăх тытакан предприятисемпе учрежденисем çук. Подсобнăй хуçалăхсене çěнěрен организацилемелле.

Хулари предприятисемпе учрежденисем подсобнăй хуçалăхсем организацилеме ěççынни депутачěсен райсовет исполкомне çěр уйăрса пама ыйтса заявленисем пама пуçларěç. Паянхи куна горпо, вăтам шкул, профтехшкул, больница, ачасен сачěпе ясли тата ытти те заявленисем панă.

Предприятисемпе учрежденисем валли подсобнăй хуçалăхсем организацилеме çěр çителěклě. Анчах та райсовет исполкомě çěр валеçсе пама васкамасть. Паянхи куна пěр заявление те пăхса тухман.

Райсовет исполкомěн предприятисемпе учрежденисене подсобнăй хуçалăхсем организацилеме пулăшмалла.

Г. ПЕТРОВ.

Аманнă боецсемшěн халăх тăрăшать

Аманнă хыççăн сывалса тухса фронта таврăннă боецсенчен пирěн госпитальсем нумай çырусем илеççě. Çав çырусенче боецсем хăйсене пăхса сыватнă, вěсемшěн тăрăшнă врачсене, сестрасене тата шефа илекен организацисене чěререн тав тăваççě. «Аманнă боецсене питě лайăх пăхнăшăн, вěсемшěн тăванла тăрăшнăшăн госпиталěн пěтěм коллективне, унăн начальникěпе комиссарне, боецсен тата командирсемпе политработниксен ячěпе пысăк тав тăватăп. Ăшшăн, кăмăллăн пăхнăшăн спасипă, спасипă татах та спасипă, хаклă юлташсем. Эсир тăрăшнине тата ăшшăн пăхнине пула эпě каллех фронта таврăнатăп»,—çапла çырать Артмеладзе боец Флягин юлташ комиссар пулса тăракан госпитале. Сывалса тухнă боецсем ушкăнě республикăри партипе совет, комсомолпа профсоюз организацисене, вěсем госпитале шефа илсе уншăн тăрăшнăшăн, чěререн тав тăвать.

Пирěн халăх хăйěн çарне хěрÿллěн юратать. «Тěнчере нисТа та çаршăн пирěн патра тăрăшнă пек тăрăшмаççě. Пирěн патра çарсене юратаççě, вěсене хисеплеççě, вěсемшěн тăрăшаççě» (Сталин). Германи фашизмне çěмěрсе тăкассишěн пыракан пěтěмěшле кěрешÿре Хěрлě Çар боецěсемпе ěç фронтěнчи боецсем пěр-пěрне юратса çирěппěн çыхăнса тăраççě. Хěрлě Çар боецěсене, отечественнăй вăрçă фрончěсенче фашизма хирěç паттăррăн кěрешекенскерсене, совет халăхě ăшшăн юратса тăрать. Совет çыннисемшěн юратнă тăван çěршыврăн хаклăраххи нимěн те çук. Пирěн çěршывăн кашни патриочě тăшмана çěнтерессишěн кěрешет, Хěрлě Çара пулăшас, унăн вăй-хăватне ÿстерес тěлěшпе мěн тума пултарнине пурне те тăвать. Çавăнпа та ěнтě халăх аманнă боецсемшěн тăван амăшě пек тăрăшать.

Пирěн республикăри ěççыннисем, Совет Союзěн пěтěм халăхě пекех, аманнă боецсемшěн пěтěм кăмăлран тăрăшаççě, мěншěн тесен çав боецсем пирěн тěрěс ěçшěн паттăррăн кěрешнине вěсем пěлсе тăраççě. Суранланнă боецсене хăвăртрах сыватса Хěрлě Çар ретне тăратассишěн пирěн ěççыннисем медицина работникěсемпе пěрле пур майсемпе те тăрăшаççě.

Аманнă боецсемшěн тăрăшни госпитальсене шефа илнинче уççăн курăнать. Çак ěç пирěн республикăра малтанхи кунсенчен пуçласах анлăн пулса пыма тытăнчě. Рабочисемпе служащисем, колхозниксемпе килхуçи хěрарăмěсем, вěренекенсем, аманнă боецсемпе командирсем валли лайăх условисем туса парас тесе, госпитальсенче пысăк ěçсем туса ирттереççě. Малтанхи кунсенче шефа илекен организацисем тасалăхшăн, палатăсенче илем кÿрессишěн чылай тăрăшатчěç, шеф организацисенчен пынă уйрăм юлташсем госпитальсенче хěрлě кěтессене тата клубсене лайăх йěрке кěлессишěн тăрăшса кунěн-çěрěн ěçлетчěç.

Шефа илес ěçре организаци енěпе малтанхи кунсенче пулнă çитменлěхсене парти организацисем тăрăшнипе халě пěтернě. Аманнă боецсене пулăшас тěлěшпе ěçлекен республикăри комитет тата ВКП(б) Шупашкар хула комитечě госпитальсене шефа илес ěçе вăйлатас тěлěшпе пысăк ěçсем туса ирттерчěç. Шефа илекен организацисем халě республикăри комитетпа парти организацисем пулăшнипе питех те пысăк ěç туса пыраççě. Госпитальсене пулăшас тěлěшпе шеф организацийěсем туман ěç халě çукпа пěрех. Кěпе-йěмсене çăвасси тата сапласси, чирлисем патěнче дежурствăра пуласси, апат-çимěç парас ěçе хутшăнасси, чирлисем валли кěнекесем тупса хатěрлесси, палатăсене тата клубсемпе хěрлě кěтессене тасалăхра тытасси,—çак ěçсене пурне те шеф организацийěсем халě анлăн туса пыраççě.

Братчиков юлташ комиссар пулса ěçлекен госпитальре хěрарăмсем пысăк ěç тăваççě. Трубкина юлташа кухньăра тата столовăйра тасалăха сăнама çирěплетнě. Вăл унта кухньăпа столовăй ěçне тěрěслесе тăрать çеç мар, тата аманнă боецсене апат-çимěç парас ěçе те активлăн хутшăнать. Вăл пулăшнипе кухньăра чылай çитменлěхсем тупнă, производствăллă канашлу ирттерсе вăл çитменлěхсене пěтернě.

Аслă пионер вожатăй, комсомолка Чернова юлташ пуçарнипе, Шупашкар хулинчи пěр вăтам шкулта вěренекенсем Терехова юлташ начальник пулса тăракан госпитале шефа илнě. Вěренекенсем аманнă боецсене тăтăшах концертсем кăтартаççě тата вечерсем туса ирттереççě. Аслă классенче вěренекен хěрачасем вěренсе пěтернě хыççăн час-часах госпитале кěпе-йěм çума, хаçатсемпе кěнекесем вуласа пама т. ыт. ěçсене тума çÿреççě.

Пирěн республикăри пěр хулари сандружинницăсем аманнă боецсене кěтсе илес, вěсене медицина енěпе пулăшу парас, кěпе-йěм çуса пулăшас тěлěшпе паха ěçсем тăваççě. Госпитальсене пулăшас ěçре Р. Куликова, В. Воронкова, М. Никишина, З. Брейкина, Мухрына, Жаворонкова юлташсем тата килхуçи хěрарăмěсем Ларкинăпа Горынина юлташсем уйрăмăнах палăрчěç. Çак активисткăсем пурте производствăран уйăрăлмасăр медсестрасен курсне вěренсе пěтернě, халě аманнă боецсене сыватас ěçре врачсене активлăн пулăшса пыраççě.

Аманнă боецсене пулăшас тěлěшпе паттăррăн ěçлекен патриоткăсене нумаййăн илсе кăтартма пулать. Вěсем пурте пирěн çěршыври ěççыннисем Хěрлě Çарăн паттăр боецěсемшěн чун-чěререн тăрăшнине кăтартса пыраççě.

Пирěн республикăра госпитальсене материальнăй пулăшу парасси анлăн сарăлса кайрě. Партипе совет органěсем çак ыйтупа куллен интересленсе ертсе пынă çěрте, госпитальсене пулăшассине фронта пулăшасси вырăнне хурса хакланă çěрте çак ěç лайăх пулса пырать. Кун пек пулăшăва лайăх организациленин примерне ВКП(б) Шупашкар хула комитечě кăтартса парать, вăл хулари тата ялсенчи ěççыннисене çак ěçе анлăн мобилизацилеме пултарчě. Шупашкар хулинчи рабочисемпе служащисем тата Шупашкар районěнчи колхозниксем пирěн госпитальсене пысăк пулăшу параççě. Улатăр районěнчи ěççыннисем госпитальсене пулăшма, туллимар даннăйсем тăрăх, 6.520 килограмм аш-какай, 686 килограмм çу, 1.455 литр сěт, 1.502 килограмм пыл, 6.887 килограмм тулă çăнăхě, 3.280 çăмарта, 1.059 килограмм çěрулми, 685 тарелка, 538 чей стаканě, 1.457 сăмса тутри, 225 килограмм махорка т. ыт. япаласем нумай пухса панă.

Госпитальсене материальнăй пулăшу парасси государствăн пысăк ěçě пулса тăрать, вăл ěçе ВКП(б) райкомěсен куллен ертсе пырас пулать. Анчах та çак тěлěшпе ВКП(б) райкомěсен секретарěсемпе райсовет исполкомěсен председателěсем пурте мар-ха тивěçлипе ěçлесе пыраççě. ВКП(б) Шăхасан, Çěрпÿ, Етěрне, Элěк, Кувакино, Вăрнар, Куславкка райкомěсем çителěксěр ěçлеççě, вěсем хăйсем шефа илнě госпитальсене çителěклě пулăшса тăмаççě, пулăшсан та вăхăтран вăхăта çеç пулăшаççě. Çÿлтеасăннă районсенчи партипе совет организацисен руководителěсем хăйсем шефа илнě госпитальсенче сайра хутра çеç пулаççě. Вěсен ěçěпе çителěксěр интересленеççě. Çапла вара, госпитальсене пулăшас ěçе пирěн нумай лайăхлатмалла пулать.

Госпитальсене материальнăй пулăшу парасси питех те кирлě ěç пулса тăрать анчах та шеф организацисен парнесем пухса янипех чарăнса лармалла мар. Шеф ěçě пур енěпе те пулса пымалла. Шеф ěçěн формисем тěрлěрен пулмалла. Агитациллě, культурăллă-массăллă ěçе йěркелесе ярасси, медработниксен калăрěсене хатěрлесси, сестрасемпе сандружинницăсене вěрентекен курссен йышне ÿстересси, донорсен хисепне нумайлатасси, сывалса тухнă боецсене ěçе вырнаçтарасси, вěсене çěнě професси вěрентесси, госпитальсене подсобнăй хуçалăхсем организацилеме пулăшасси,—çаксене пурне те шеф организацисем туса пыма тивěçлě.

Госпитальсене санитари енчен тасалăхра тытас тěлěшпе те нумай ěçсем тумалла-ха. Похисов юлташ начальник пулса тăракан госпитальре тасалăх тăвассишěн чылай ěçлемелле пулать. Кунта уйрăм палатăсем илемлě мар, таса мар. Çавăн пекех политикăллă ěçе те чылай вăйлатмалла. Госпитальсен комиссарěсен парти организацисемпе кашни кунах çыхăнса тăрас пулать. Парти организацисен госпитальсемпе тăтăшах интересленмелле, вěсен пурнăçне пěлсе тăмалла, вăхăтра пулăшу памалла. Парти организацисен чи лайăх юлташсене госпитальсенче политикăллă ěçе туса пыма, чи лайăх пропагандистсемпе агитаторсене лекцисем, докладсем, каласусем туса ирттерме ярас пулать. Кашни госпиталěн çителěклě хаçат-журнал, библиотека пултăр, репродукторсем пулччăр, киносемпе концертсем госпитальсенче час-часах пулса иртчěр, — çакăншăн тăрăшмалла пирěн.

Госпитальсене шефа илес тата материальнăй пулăшу парас ěçе сарса ярас тěлěшпе пирěн республикăри партипе совет организацисем пысăк ěç туса ирттерчěç. Çак ěçри хăшпěр çитменлěхсене пěтерсе, вăл пулăшăва малашне те вăйлатса пырасси—пирěн задача. Боецсемпе командирсем хăйсен суранěсене хăвăрт тÿрлетчěр тесе, вěсем нимěç захватчикěсене татăклăн çěмěрсе тăкма фронта часрах таврăнччăр тесе, пирěн тума кирлине пурне те тăвас пулать.

А. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомěн секретарě.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Решенисем конкретлă пулмалла

Парторганизаци членĕсен пухăвĕ йышăннă решени—парторганизацин тата организацири коммунистсен ĕç программи пулса тăрать. Çав решение парторганизаци секретарĕ те, уйрăм коммунистсем те пăсма пултараймаççĕ. Апла пулсан, çав решение пурнăçа кĕртессишĕн ĕçлесси кашни коммунистăн тивĕçĕ пулса тăрать. Решение пурнăçламанни, ăна пăсни—партин уставне пăхăнманни, дисциплинăна пăсни пулать. Çавăнпа та ĕнтĕ пуçламĕш парторганизацисем йышăнакан решенисем конкретлă пулмалла. Конкретлă мар решени хăйĕн хакне çухатать, тумалли ĕçсен срокне вăраха тăсма е çав ĕçе пачах та тумасăр хăварма май парать. Конкретлă мар решение пурнăçлама та йывăр, е пачах та май çук, вăл пурнăçланса пынине тĕрĕслеме те кансĕр.

Анчах та уйрăм парторганизацисенче конкретлă мар решенисем, «пĕтĕмĕшле» решенисем йышăнас йăла халĕ те пур-ха. Тĕслĕхрен, Шупашкар районĕнчи Иккассинчи территориальнăй пуçламĕш парторганизацие илер. Мартăн 3-мĕшĕнче пулса иртнĕ хăйĕн пухăвĕнче вĕсем ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн пĕрлешӳллĕ пленумĕн итогĕсем тăрăх коммунистсен районри пухăвĕ йышăннă решенисене сӳтсе-явнă. Пуху пленумăн тата коммунистсен районри пухăвĕн решенийĕсене ырлать те икĕ пунктлă çакăн пек решени йышăнса хурать:

«1. Аван çапас ĕçе пӳр колхозсенче те вĕçлемелле, тырăсене сортласа тивĕçлĕ кондицие çитермелле, пахча-çимĕç вăрлăхĕсене хатĕрлемелле.

2. Партин пур кандидачĕсемпе членĕсен те хăйсем çумне çирĕплетнĕ колхозсенче пленумăн тата коммунистсен районри пухăвĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пымалла. Парторганизацин агитколлективпа çирĕп çыхăну тытмалла, комсомола пур ĕçе те активлăн хутшăнтармалла. Вăрман хатĕрлес плана кĕске вăхăтра тултармалла».

Решени пĕтĕмпех «тумалла». «пĕтермелле» текен сăмахсемпе тулса ларнă, анчах пĕр ĕç пирки те уçăмлăн татса калани çук. Çав решение пурнăçа кĕртме те, коммунистсем ăна пурнăçлассишĕн мĕнле кĕрешнине тĕрĕслеме те хĕн. Мĕншĕн тесен кунта камăн мĕн тумаллине, хăçан тата мĕнле тумаллине кăтартса паман.

Мĕнрен килнĕ-ха кунашкал решени йышăнасси? ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн пĕрлешӳллĕ пленумĕ тата коммунистсен районри пухăвĕ Сталин юлташ 1941 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă докладра партнă задачăсене пурнăçлани çинчен тата 1941 çулти иккĕмĕш çурçуллăхра партие çĕнĕрен членсем илес ĕç мĕнле тăни çинчен йышăннă решенисене сӳтсе-явнă хыççăн та умра тăракан ĕçсене тăвасси çинчен конкретнăй решени йышăнмалла пулман-и вара? Сăлтавĕ çакăнта: парторганизаци пленумăн тата районри коммунистсен пухăвĕн решенийĕсене ячĕшĕн кăна сӳтсе-явнă, ăна вырăнти ĕçсемпе çыхăнтарман. Территориальнăй парторганизаци колхозсенче Сталин юлташăн кăтартăвĕсене мĕнле пурнăçласа пынипе тĕплĕн интересленмен, докладра уйрăм коммунистсен, колхоз руководителĕсен çитменлĕхĕсене çирĕппĕн критикăламан. Пуху критикăсăр иртнĕ. Çапла решенийĕ те сӳрĕк, конкретно мар тухнă. Решенире партие çĕнĕ членсем илес ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе нимĕн те çырман. Организацире 4 кандидат. Вĕсен пурин те кандидатра тăрас вăхăчĕсем иртнĕ. Парторганизаци вĕсене порученисем паман. Комсомолăн колхозсенчи организацийĕсем начар ĕçлеççĕ, парторганизаци енчен вĕсем тивĕçлĕ пулăшу илеймеççĕ.

Ялсоветне кĕрекен пур колхозсенче те вăрлăхсем нӳрĕ, вĕсене типĕтес ĕçе пуçăнман. «XI лет Чувашии» колхозра вăрлăхсене сортлама тытăнман, триер кумай вăхăт ĕçсĕрех ларнă, клевер вăрлăхне çапман. Çак çитменлĕхсене пĕтерсе, çуракине большевикла ирттерме хатĕрленес тĕлĕшпе пуху хăйĕн решенийĕнче пĕр конкретнăй ĕç те тума палăртман.

Çĕньялти территориальнăй пуçламĕш парторганизаци те, ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн пĕрлешӳллĕ пленумĕн решенийĕсене сӳтсе-явнă хыççăн, Иккассинчи территориальнăй пуçламĕш парторганизаци евĕрлех «пĕтĕмĕшле» решени йышăнса хăварнă. Тăватă пунктлă решенире ăна тумалла, кăна тумалла, тесе кăна çырса хунă. Камăн тумаллине тата хăш вăхăтра пурнăçламаллине кăтартман. Çапла вара çакăн пек решенисене пурнăçлассишĕн никам та ответлă пулмасть. Вĕсем пурнăçланнине те тĕрĕслеме йывăр, мĕншĕн тесен решенисенче татăклă калани çук.

Пуçламĕш парторганизаци пухăвĕн решенийĕ конкретнăй пулмалла. Вăл пĕтĕмĕшле ыйтусенчен мар, вырăнта тумалли ĕçсенчен тухса тăмалла. Ĕçри çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе татăклă кĕрешӳве чĕнекен, ертсе пыракан решени пулмалла.

Т. ЛОГИНОВ.

Кок-сагыз вăрлăхне мĕнле хатĕрлемелле

Кок-сагыза çураки пуçлансанах, çурхи тулăпа урпана акнă вăхăтра акаççĕ. Çапла ир акнипе çĕрти нӳрлĕхпе туллин усă курма май пур, нӳрĕ çĕр çинче кок-сагыз пĕр вăхăтлăн, кал-кал та лайăх шăтать. Кая юлса аксан, кок-сагызăн тухăçлăхĕ начар пулать, калчисем сайра çеç пулаççĕ.

Суркунне акăнакан кок-сагызăн вăррисене яровизацилесе акас пулать. Яровизацилесе акмасан (шăтармасăр аксан), кок-сагызăн калчисем шăтса тухасси вăрăма каять тата вĕсем тикĕс, пĕр тан шăтса ӳсмеççĕ.

Кок-сагыз вăррисене яровизацилессине 2 градусран ытла мар ăшăра туса ирттереççĕ. Вăрлăха шултăркарах пиртен çĕленĕ михĕсем ăшне михĕ калăпĕшĕн тăваттăмĕш пайĕ чухлĕ хураççĕ, вĕсенчен çыхаççĕ. Михĕ çыххи çумне йывăç хăма татăкĕ çыпăçтараççĕ, ун çине миххе мĕн чухлĕ вăрлăх хунине çыраççĕ. Çапла вăрлăх тултарнă михĕсене шыва чиксе 2—3 сехет хушши тытаççĕ, вăл вăхăтра вĕсене, вăрлăх пĕр пек шӳтĕр тесе, 2—3 хутчен кăларса силлеççĕ, хутăштараççĕ. 2—3 сехет иртнĕ хыççăн михĕсене шывран кăларса çакаççĕ, вĕсенчен ытлашши шыва юхтараççĕ. Кун хыççăн исленнĕ вăрлăха яровизаци тумалли вырăна илсе каяççĕ.

Кок-сагыз вăрлăхне яровизацилемелли вырăнсем: ледниксем, пăр, е юр упранса тăракан вырăнсем пулаççĕ. Вĕсем çук пулсан, сарайсенче, хĕвелтен хӳтĕленĕ вырăнсенче лакăм чавас пулать, унта пăр, е юр тултарса çийĕнчен улăмпа витес пулать. Лакăм чавса кок-сагыз яровизацилемелли вырăн тунă чухне çакна шута илес пулать: пĕр тăваткăл метр калăпĕш вырăна 15 килограмм таран вăрлăх вырнаçтармалла.

Шывран кăларса сăрхăнтарнă вăрлăха михĕсемпех пăр е юр çине сарса 10—15 кун хушши тытса тăраççĕ. Çак вăхăтра вăрлăха кашни кунах сăнаса, михĕсене çавăрса тăрас пулать. Температура 2 градус ăшăран çӳлерех хăпарнă пулсан, михĕсем çине те юр хурас пулать. Кунсăр пуçне кашни 5—6 кун хушшинче михĕсене юр ăшĕнчен кăларса, çыххине салтса силлесе усăлтарас пулать.

Çӳлте асăннă вăхăт иртсен, вăрлăха михĕсенчех таса шывпа сăваççĕ, кун хыççăнах шăналăк е брезент çине сарса усă сывлăшра вырттараççĕ. Кăна çилтен тата хĕвелтен хӳтĕленĕ вырăнта тăвас пулать. Вăрлăха ывçă çине илсен юхма пултаракан пуличчен типĕтес пулать, пĕр-пĕрин çумне çыпçăнса ларнă муклашкасем пулмалла мар.

Анчах та кок-сагыз вăррине типсе çитиччченех типĕтме юрамасть, вăрлăхăн 2—3 проценчĕ çинче шурă куççем курăнма пуçласан, кок-сагыз вăрлăхĕ акăнма хатĕр пулса çитет. Çак вăхăтра ăна акма çанталăк май парать пулсан, пур пĕрчĕсем çинче те шурă куççем тухассине кĕтмесĕрех, акмалла. Çанталăк ака тума май памасть пулсан, кок-сагыз вăрлăхне каллех юр ăшĕнче, 2 градус ăшăран ытла мар температурăра тытас пулать.

Академик Т. Д. Лысенко кăтартса панă тăрăх, кок-сагыз вăрлăхне акма кĕскерех срокра та хатĕрлеме пулать. Акас умĕн 3—4 кун маларах вăрлăха 2—3 сехет хушши шывра тытас пулать. Кун хыççăн 15—16 градуслă ăшă пӳртре шăналăк е брезент çине çӳхен сарса хурас пулать. Кашни 2—3 сехетре вăрлăха пăтраштармалла. 1—2 кун иртнĕ хыççăн, вăрлăхăн 3—5 проценчĕ шăтса пуç кăларма тытăнсан, пӳлĕмри температурăна 10—12 градус ăшша çитерес пулать, вăрлăха тата çӳхерехĕн сарса малалла ӳсме чарас пулать. Çак вăхăтра вара кок-сагыза аксан та юрать. Акма çанталăк кансĕрлет пулсан, çӳлте асăннă пекех, вăрлăха 2 градус ăшăра тытса усрас пулать.

Профессор Л. ПЕЛЬЦИХ.

Заем тытакансем хушшинче ĕçлессине вăйлатар

Совет государствин заемĕсене ĕççыннисем хапăл туса йышăнаççĕ, вĕсене яланах кăларнинчен ытларах çырăнса илеççĕ. Иртнĕ çул Виççĕмĕш Пятилеткăн (4-мĕш çулхи кăларăм) заемне кăларнинчен ирттерсе 1.334.229.000 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Ăна сарас ĕç пирĕн республикăра та ăнăçлăн иртрĕ. 1941 çулта заема çырăннин сумми, 1940 çултипе танлаштарсан, 4 миллион тенкĕ ытларах пулчĕ. Виççĕмĕш Пятилеткăн (4-мĕш çулхи кăларăм) заемне пурĕ 225 пин çын ытла çырăнса илчĕç. Ĕççыннисенчен чылайĕшĕсем хăйсен уйăхри ĕçукçине государствăна кивçен пачĕç. Виççĕмĕш Пятилеткăн (4-мĕш çулхи кăларăм) заемĕ тухнă ятпа пуçтарнă митингра Кувакино районĕнчи «Çуталла» колхоз членĕ, 60 çулти старик А. Д. Жидяев юлташ çапла каланăччĕ: «Заем укçи ăçта кайнине эпĕ аван пĕлетĕп, хамăрăн тăван государствăна пулăшас тесе эпĕ заема 125 тенкĕлĕх çырăнатăп». Çавăн пекех Вăрмар районĕнчи «Пионер» колхоз членĕ, 65 çулти старик Иван Коротков та митингра çапла каланă: «Ман ывăл Хĕрлĕ Çар ретĕнче, вăл алла хĕçпăшал тытса тăван çĕршывăн чиккисене сыхлать. Эпĕ, ватăскер, Хĕрлĕ Çарта пулма пултараймастăп пулсан, заем çырăнса государствăна пулăшма пултаратăп», тенĕ. Заема вăл 50 тенкĕлĕх çырăнчĕ те çавăнтах укçине тӳлерĕ.

Чылай районсенчи ĕççыннисем, укçине çырăннă хыççăнах тӳлесе, облигацисене алла илчĕç. Чкаловски тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи колхозниксем икĕ кун хушшинче 214 пин тенкĕ (заема çырăннă суммăн 50 проценчĕ чухлĕ) укçа пухса панă.

Тарапайкасси (Хĕрлĕ Чутай районĕ), Кĕçĕн Кипеч (Çĕрпӳ районĕ), Мăн Яваш (Калинински район), Чепкас-Никольски (Шăмăршă районĕ) ялсовечĕсенчи ĕççыннисем заем укçине кĕске вăхăтрах пĕтĕмпех тӳлесе татнă. Заем сарас тĕлĕшпе кăтартуллă ĕçленĕшĕн Чăваш АССР Совнаркомĕ çак ялсовечĕсене 8—10-шар пин тенкĕ укçа парса премилерĕ, вĕсен председателĕсемпе финагенчĕсене тав турĕ.

Заем çырăнакансен йышĕ çулран çул ӳснипе пĕрлех, ĕççыннисем заемран илекен тупăш та ӳсет. Пирĕн Чăваш республикинчи ĕççыннисене 1940 çулта вылявсем шучĕпе тата купонсем тăрăх 1 миллион та 999 пин тенкĕ тӳленĕ пулсан, 1941 çулта 2 миллион та 791 пин тенкĕ тӳленĕ. Вăл шутран Улатăр районĕнче 334 пин тенкĕ, Канаш районĕнче 217 пин тенкĕ, Çĕрпӳ районĕнче 102 пин тенкĕ, Шупашкар хулинче 525 пин тенкĕ тӳленĕ.

Çав вăхăтрах пирĕн заем тытакансемпе ĕçлессине те манма юрамасть. Ку тĕлĕшпе кашни ялсовет исполкомĕнче, вулав çуртĕнче, пысăкрах предприятисемпе учрежденисенче (республикипе пурĕ 1050 çĕрте) справка паракан сĕтелсем организациленĕ. Вĕсенче заем тытакансем выляв тухнине тĕрĕслеме тата çĕнĕ вылявсем хăçан пуласси çинчен ыйтса пĕлме пултараççĕ.

Заем тытакансемпе ĕçлессине Елчĕк районĕнчи чылай ялсовечĕсенче лайăх йĕркеленĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Елчĕк, Эйпеç Кушкă тата Çĕнĕ Пайтерек ялсовечĕсене асăнса хăвармалла. Заем тытакансене иртнĕ çулта пурĕ 67.127 тенкĕлĕх выляв укçи тӳленĕ, май уйăхĕнче кăна 900 выляв тухнине палăртнă. Виççĕмĕш Пятилетка (3-мĕш çулхи кăларăм) заемĕн 1-мĕш тиражĕ пулса иртсенех, заем тытакансене 43 çынна 3.400 тенкĕ выляв укçи тӳленĕ.

Тăвай районĕнче те заем тытакансемпе начар мар ĕçлеççĕ. Иваново ялсоветĕнчи справка паракан сĕтел работникĕ И. Герасимов юлташ 20 выляв, Беляево ялсоветĕнчи справка паракан сĕтел работникĕ Р. Вакку 10 выляв палăртнă.

Заем тытакансемпе ĕçлемелли лайăх майсенчен пĕри вăл—выляв тухнине тĕрĕслемелли бюро пулса тăрать. Унăн ĕçĕсем йывăррах та мар. Кашни облигаци пуçне пĕрер карточка тытас пулать. Çав карточка çине заемăн ятне, сери номерне тата заем тытаканăн адресне çырмалла та, ăна çывăхри перекет кассине памалла. Вара перекет кассинче выляв тухнипе тухманнине çав карточка тăрăх тĕрĕслесе тăраççĕ. Выляв тухсан, ун çинчен заем хуçине пĕлтереççĕ. Тĕрĕслев бюровĕн карточкине кашни перекет кассипе комсодрах гуянма пулать. Вăл 15 пус кăна тăрать.

Чăваш республикинчи перекет кассисемпе Госкредит Управлени çумĕнчи тĕрĕслев бюровĕ хальхи вăхăтра 53 пин ытла карточка тытать. Выляв тухнипе тухманнине çав карточкăсем тăрăх кашни тираж хыççăнах тĕрĕслесе тăрать. Виççĕмĕш Пятилетка (3-мĕш çулхи кăларăм) Заемăн 5-мĕш тиражĕ тăрăх кăна 158 выляв тухнине палăртнă.

Выляв тухнине тĕрĕслемелли карточкăсене сутас ĕçе Шăмăршă, Сĕнтĕр, Йĕпреç районĕсенче лайăх йĕркеленĕ. Иртнĕ çулта ку районсенче 2—3-шер пин карточка сутнă.

Анчах çак кирлĕ ĕçе хакламан перекет кассисем те пур. Етĕрне хулинчи перекет касси, сăмахран, 1941 çулта пĕр карточка та сутман.

Хальхи вăхăтра пур районсенче те комсодсемпе заем уполномоченнăйĕсен ĕçĕсене тĕрĕслес ĕç пырать. Çавăнпа та финанс оргăнĕсемпе перекет кассисен задачи—заем тытакансемпе ĕçлессине çирĕплетесси, заем усси çинчен ĕççыннисем хушшинче массăллă агитаци ĕçне пĕр чарăнмасăр туса пырасси пулать.

А. МИХАЙЛОВ.
Чăваш АССР Перекет кассисен Управленийĕн начальник заместителĕ.

Комсомолец-финагент

Комсомолец Иван Григорьев çамрăкха. Анчах ĕçре вăл хăйне опытлă çын пек кăтартать. Вăл чылайранпа Сыпайкасси ялсоветĕнче (Ишлей р.) избач пулса ĕçлерĕ. Ялсоветне кĕрекен колхозсенче агитаципе-массăллă ĕçе лайăх йĕркелесе, вăл ялсовечĕпе колхозсене паха çитĕнӳсем тума пулăшрĕ. Нумаях пулмасть, финагент З. Воронцов фронта кайнă хыççăн, ун вырăнне Григорьева ĕçлеме лартрĕç. Ку ĕçре вăл чăннипех кăтартуллă ĕçлеме пултарнине кăтартрĕ.

Агитаципе-массăллă ĕçе туса пыни Григорьев юлташа налог пухнă çĕрте чылай пулăшать. Çавăн пекех ăна комсомолецсемпе çамрăксем те хастарлăн пулăшаççĕ.

Сталин юлташ приказне ĕççыннисене тĕплĕн ăнлантарса панă хыççăн вăрçă вăхăтĕнчи налог уйрăмăнах нумай пухăннине палăртмалла. «Ыраш» колхозран Раиса Вершинина, «Клевер» колхозран Смелов, Алмазов, Григорьева, Озиков комсомолецсем вăрçă вăхăтĕнчи налога извещени парсан 3—4 кунтанах тӳлесе татрĕç. Вĕсен примерĕпе ытти колхозниксемпе колхозницăсем те налога тӳлеççĕ. Сăмахран, «Клевер» колхозри Иван Щукин—икĕ çыншăн 350 тенкĕ, Ермолай Воронцов виçĕ çыншăн мартăн 15-мĕш тĕлне налога тӳлесе татса алла квитанцисем илчĕç.

Вăрçă вăхăтĕнчи налога пухасси уйрăмăнах «Клевер» колхозра аван пырать. Колхозра ку налога тӳлемесĕр юлнисем 2—3 хуçалăхран ытла мар. Çавăн пекех единоличниксем çине хунă налога тӳлесе татассине те начар мар йĕркеленĕ. Ю. Барминова, З. Барминова, А. Кочергова тата ытти çамрăксем те ку налога срокченех тӳлерĕç.

Мартăн 6-мĕшпе 20-мĕш кунĕсем хушшинче пĕтĕмпе 12 пин тенкĕ ытла укçа пухăннă. Вăл шутран вăрçă вăхăтĕнчи налог—10 пин тенкĕ ытла.

Григорьев хăйĕн ĕçĕпе кăна мар интересленет. Вăл колхозсене çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе кĕтсе илме ывăнма пĕлмесĕр пулăшать. Вăл ертсе пынипе «Труд» колхозра комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕнче М. И. Калинин юлташăн статьине сӳтсе-явнă. Унта комсомолецсемпе çамрăксем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç. Комсомол организацийĕн секретарĕ П. Васильева, комсомолец Е. Чернов 15-шер килограмм ясмăк вăрлăхне алăпа сортлама пулчĕç. И. Яшкова, М. Смирнова, Н. Любимова комсомолкăсем 10-шар килограмм суйлама обязательствăсем илчĕç. К. Яшковăпа В. Кудряшова юлташсем 8-шар килограмм ясмăк вăрлăхне алăпа сортланă та ĕнтĕ.

Колхоза çуракине хатĕрленме пулăшас майпа К. Яшковăпа А. Шишкин юлташсем 10 центнер кĕл, 10 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Халĕ вĕсем çĕнĕрен 10-шар центнер кĕл, 15-шер центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 5 центнер фекали пухма пулчĕç.

Григорьев юлташ колхозра малта пыракан çамрăксене комсомола илес енĕпе те тăрăшса ĕçлет. Çак кунсенче «Клевер» колхозри комсомолецсен пухăвĕнче Анатолий Оленова, «Ыраш» колхозра Федор Грибова комсомола илнĕ. Федор Грибов юлташ колхозра пĕр çул ытла ĕнтĕ конюх пулса ĕçлет. Вăл сыснасен йышне ӳстерессишĕн çине тăрса кĕрешет.

А. МИХАЙЛОВ.

„Победа“ колхозра

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Кĕçĕн Чуллăри «Победа» колхозăн кăçал 53,88 гектар çĕр лаптăкĕ çине тĕштырă, 13 гектар çине вика, 2 гектар çине кантăр вăрри акмалла тата 6 гектар çине çĕрулми лартмалла. Колхоз вăрлăх фондне тахçанах уйăрса хунă, тасатнă. Вăрлăхсем типĕ амбарсенче упранаççĕ.

Тырпул тухăçлăхне ӳстерме колхоз уйăхре 1.800 лав тислĕк кăларнă. Вăл шутран колхозниксем хăйсен килĕсенчен 400 лав турттарнă. Унсăр пуçне 25 лав фекали, 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 10 центнер кĕл, 10 центнер фосфорит çăнăхĕ хатĕрленĕ.

Колхоз ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсене февралĕн 15-мĕш тĕлнех юсаса çитернĕ. Машинăсене юсанă çĕрте К. Федоров колхозник тăрăшса ĕçлерĕ.

Ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсем ăнсăртран çĕмĕрĕлесрен е тутăхса ларасран И. Григорьев колхозник асăрхаса тăрать. Вĕсем ĕçре яланах юсавлă пулассишĕн вăл ответлă.

Ут таврашĕсене кашни лаша валли 2—3-шер комплект хатĕрленĕ. 70—80 çулти колхозниксем урхалăх-пăявсем халĕ те яваççĕ.

Колхоз правленийĕ çуракине 7 кун хушшинче вĕçлеме палăртса план туса хатĕрленĕ. План тăрăх кашни колхозникĕн мĕн тумаллине палăртнă. Камăн мĕнле лашапа ĕçлемеллине те плана кĕртнĕ.

Тĕплĕн шухăшласа тунă çураки планне колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕнче сӳтсе-явса çирĕплетнĕ. Кунта кашни çын çураки вăхăтĕнче мĕн тумаллине аван пĕлсе тăрать.

«Победа» колхоз иртнĕ çулта кашни гектартан вăтам шутпа 13,9 центнер ыраш, 16,1 центнер пăри пухса илнĕ, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра парса татнă. Оборона фондне 2,36 центнер тĕштырă, 112 литр сĕт, 21,1 килограмм çăм, 15 центнер купăста тата 8,6 центнер çĕрулми панă. Государствăна сельпо урлă 16,8 центнер тĕштырă сутнă, хулари предприятисенчи рабочисем валли 3 центнер тĕштырă, пĕр центнер сухан тата 2 килограмм çу панă. Кунпа пĕрлех колхозниксене ĕçкунĕсем çине 4-шар килограмм тĕштырă, 3,4-шар килограмм çĕрулми тата 50-шар пус укçа валеçнĕ. К. Федоров, А. Ильин, Ф. Иванов, М. Тимофеев, И. Григорьев, Н. Федоров колхозниксем 150—200-шер пăт тĕштырă илчĕç.

«Победа» колхоз членĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем кăçал нихçанхинчен вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Г. ПЕТРОВ.

ВĂРМАН ХАТĔРЛЕВĔ

Çаврăнăçусăр ĕçленине пула

ÇĔРПӲ. («Чăваш Коммуни» корр.). Леспромхоз канцелярийĕнчен иртен пуçласа каçченех çын таталма пĕлмест. Хăшпĕр чухне кунта кĕрсе тухмалла мар çын тулать. Пынă çынсем пĕр-пĕринпе калаçаççĕ, шавлаççĕ, чĕлĕм те туртса тултараççĕ. Кун пек чух вара леспромхозра ĕçлекенсем пынă çынсене вăрçса кăна лараççĕ:

— Кунта совет учрежденийĕ, пире ĕçлеме ан кансĕрлĕр, тархасшăн!—теççĕ. Ку, пĕр енчен, тĕрĕс, совет учрежденийĕнче ĕçлекен çынсене кансĕрлеме кирлĕ мар. Анчах та пыракан çынсем те унта хăйсен ирĕкĕпе пымаççĕ. Вĕсем хăйсен пӳрчĕсемпе хваттерĕсене хутса ăшăтма вутă илес шухăшпа килеççĕ.

Леспромхозăн пĕрремĕш кварталта хулари предприятисемпе учрежденисем тата ĕççыннисем валли 8 пин кубометр вутă касса хатĕрлемелле, 4.500 кубометр турттармалла пулнă. Вăрман касса турттарма леспромхоз çумне 14 колхоз çирĕплетнĕ.

Çирĕплетнĕ колхозсем вăрман касса турттарас ĕçе тивĕçлипе хакламаççĕ. «Этна» колхоз (председателĕ Галкин юлташ) кашни кун 20-шер кубометр турттарас вырăнне 7—8-шар кубометр çеç турттарать. Çавăн пекех «Шестое августа», «Комбайн», «Дружба», «Новый путь», «Союз» тата ытти колхозсем те хăйсен кулленхи заданийĕсене çуррине те тултарса пыраймаççĕ. Çапла вара леспромхоз паянхи куна пĕрремĕш квартал планне 30—50 процент кăна пурнăçланă.

Ахă мĕншĕн ĕнтĕ леспромхозра кашни кунах çын нумай пулать. Пынă çынсенчен чылайĕшĕсем вутă тивĕçмен пирки пĕр кубометршăн 7—8 кун иртетереççĕ.

Вăрман касса турттарас план пурнăçланса пыманни леспромхозран килет. Леспромхоз директорĕ И. Никитин, унăн заместителĕ Кагановский юлташсем çаврăнăçусăр ĕçленине пула вăрманти ĕçе лайăх организацилемен. Вĕсем хаклă вăхăта е вырăнта ытларах ларса, е унта-кунта çӳресе ирттереççĕ.

Вăрман касса турттарас план тулса пымасть пулсан та, ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ леспромхоза пулăшу пама шутламаççĕ.

ПИОНЕРСЕМ КОМСОМОЛА КĔРЕÇÇĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Комсомолăн Мăн-Шетмĕ вăтам шкулĕнчи пуçламĕш организацийĕ вĕренӳре тата общественнăй ĕçре хăйсен пысăк активлăхне кăтартнă 3 пионера ленинла комсомол ретне илчĕ.

З. ВАСИЛЬЕВ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ

КУКЕÇ. Альгешри Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн ĕне, сурăх, сысна тата чăх-чĕп фермисем çулран çул йышланса пыраççĕ. Фермăсенче пуринче те хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Партипе правительство колхозниксемпе колхозницăсене обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕпе унăн продуктивноçне ӳстернĕшĕн ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке туса панипе хавхаланса, фермăра ĕçлекен хĕрарăмсем выльăхсене лайăх пăхса усраççĕ. 1941 çулта государство панă плана колхоз сурăхсем ĕрчетес енĕпе 114 процент, ĕнесем енĕпе 118 процент, чăх-чĕп енĕпе 120 процент пурнăçларĕ.

Выльăх-чĕрлĕхсен хисепне кăçал татах ытларах ӳстерессишĕн выльăх пăхакансем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Кашни çамрăк выльăхах лайăх пăхса ӳстереççĕ. Çамрăк выльăхсене контрактацилес плана колхоз 150 процент тултарчĕ.

Я. НИКИТИН.

ФЕРМĂРИ ÇАМРĂКСЕМ

ЭЛĔК. «Самолет» колхозăн ĕне фермине П. Ивановăпа Е. Ефимов çамрăксем ĕçлеççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те 15 çула çеç кайнă. Хăйсене шанса панă 23 ĕнене вĕсем юратса пăхаççĕ. Вĕсем пăхакан ĕнесем пурте самăр.

— Манăн «План» ĕне кашни кун вуншар литр сĕт парать, часах ăкă 12-шер литр паракан пулать,—тет Иванов. Ĕнесене вăл зоотехника кăтартнă вĕсем тăрăх кирлĕ чухлĕ апат парать, вăхăтра шăварать, тасатса тăрать. Фермăра ĕçлесе иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче Иванов 112 ĕçкунĕ тунă. 1941 çулта Ивановпа Ефимов пăхакан кашни ĕнерен 1300 литр сĕт суса илнĕ. Кăçал вĕсем кашни ĕнерен 1400 литр сĕт суса илме сăмах панă. Çак обязательствăна халĕ вĕсем чыслăн пурнăçлаççĕ, ĕнесем кашни кун сĕт хушса пыраççĕ. Ферма заведующийĕ А. Рожков пултаруллă çамрăксене ырлать. Вăл, колхозри ветфельдшер В. Чехова пĕрле, вĕсене кирлĕ пулăшу парса тăрать.

Çавнашкалах Т. Максимов, В. Евдокимов çамрăксем те конюхсем пулса ĕçлеççĕ. Т. Максимов 11 лаша пăхать. Вăл пăхакан лашасем мăнтăр, ĕçре чăтăмлă. В. Евдокимов, тулли мар вăтам шкултан вĕренсе тухсан, конюх пулса ĕçлеме кăмăл тунă. Халĕ вăл 10 лашана опытлă конюхран начар мар пăхать.

В. ПЕТРОВ.

Колхоз председателĕсен курсĕ

ВКП(б) Тăвай райкомĕпе МТС политотделĕ çак кунсенче колхоз председателĕсен 5 кунлăх курсне туса ирттерчĕç. Унта ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Салмин юлташ «Колхозсенчи партиллĕ-политикăллă ĕçе мĕнле организацилемелле» темăпа, райçĕрĕç пайĕн агрономĕ Осипов юлташ агротехникăллă ыйтусем тĕлĕшпе, райпрокурор Порфирьев юлташ ялхуçалăх артелĕн уставĕ çинчен, милици начальникĕ Тимофеев юлташ колхозсенчи ĕç дисциплинине çирĕплетесси тата обществăллă пурлăха сыхласа усрасси çинчен вĕрентрĕç. Çавăн пекех колхоз председателĕсем колхозри учет ĕçне йĕркелессипе паллашрĕç.

Мартăн 31-мĕшĕнче колхоз председателĕсемпе ялсовет председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта çуракине хатĕрленес ĕçри палăрнă çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтересси çинчен, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртесси çинчен сӳтсе-явнă.

В. Ч.

Фронта кайнă арçынсен вырăнĕнче хĕрсем ĕçлеççĕ

ТĂВАЙ. Тăрмăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозра фронта кайнă чылай арçынсен вырăнĕнче хĕрсем ĕçлеççĕ. Нумаях пулмасть Ольга Егорова юлташа ферма заведующийĕ пулса ĕçлеме лартрĕç. Халĕ вăл фермăри ĕçсене опытлă работникрен начар мар туса пырать.

Хĕрсенченех колхозра бригадир пулса лайăх ĕçлекенсем те чылай. А. Михайлова, М. Петрова, Ю. Ильина тата Соловьева юлташсем колхозри пултаруллă бригадирсем пулса тăраççĕ. Вĕсем пур ĕçе те вăхăтра тата тĕплĕн тума тăрăшаççĕ. Çуракине хатĕрленсе çитнĕпе пĕрех, вĕсем вăрлăхсене сортласа çитернĕ, уя тислĕк кăларнă, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хунă, минерал çăнăхĕсене кӳрсе килнĕ.

Çавăн пекех хĕрсем колхозри ытти ĕçсене те тăваççĕ. А. Семенова—счетовод, М. Семенова—кассир, Е. Никифорова кладовщица пулса ĕçлеççĕ. М. Сергеева, М. Гаврилова тата А. Степанова хĕрарăмсем колхоз лашисене юратса пăхаççĕ.

Г. МАЛЕНДЕЙ.

Правительство тимлĕхĕпе хавхаланнă машинистсем

КАНАШ. (Хамăр корр., телефонпа). СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Чугунçул транспортĕнчи поездной тата маневровăй бригадăсен вăрçă вăхăтĕнчи ĕçукçи çинчен» тата «Поездсен бригадисене вĕсем çул çӳренĕ чухне апат çимĕç продукчĕсем хушса парасси çинчен» йышăннă постановленисем çине Канаш деповĕнчи машинистсем йывăр тиевлĕ поездсене пысăк хăвăртлăхпа илсе çӳренипе тата топливăна перекетленипе ответлеççĕ.

Мартăн 29-мĕшĕнче машинист Крестников юлташ, хăйĕн помощникĕпе—Ерофеев юлташпа пĕрле, 2.965 тонна тиенĕ поезда Канаштран Çĕмĕрле станцине пысăк хăвăртлăхпа илсе çитернĕ. Вĕсемех мартăн 31-мĕшĕнче 2.590 тонна тиенĕ тепĕр поезда Канаш—Çĕмĕрле маршрутпа илсе кайнă. Çак икĕ маршрутра Крестников машинистăн экипажĕ 5 тонна çĕркăмрăкĕ перекетлесе хăварнă.

— СССР Совнаркомĕпе партин Центральнăй Комитечĕ, поездсен бригадисем халĕ йывăр условисенче ĕçленине шута илсе, машинистсемпе кочегарсене вĕсем çул çинче пулнă кашни талăкра, карточкăпа памалли нормăсăр пуçне, апат-çимĕç продукчĕсем хушса памалла турĕç. Ку пире ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантарать. Эпĕ малашне фронтри пек ĕçлеме пулатăп,—тет Введенский юлташ.

Депори машинистсем чăнах та фронтри пекех ĕçлеççĕ. Вĕсем час-часах çул çинче 30—40-шар сехет хушши пулаççĕ. Мартăн юлашки вунăкунлăхĕнче кăна депори паровозсен бригадинче йывăр тиенĕ 7 поезда тивĕçлĕ маршрутпа илсе кайнă.

П. НИКОЛАЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 7-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

кайнă. 7 вагон пĕтĕмĕшпех çĕмĕрĕлнĕ. 150 яхăн салтак вилнĕ. Кунсăр пуçне, нимĕç влаçĕсен аллинчен 35 салтак çухалнă. Вĕсем, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче пĕтес мар шутпа, тарса пытаннă пулĕ тесе шутлаççĕ.

* * *

Фронт çывăхĕнчи районсенче пурăнакан çынсем Хĕрлĕ Çарăн боецĕсене пур енĕпе те пулăшса пыраççĕ. Кăнтăр фронтĕнче пĕр высотăшăн çапăçу пынă вăхăтра бухгалтер Нина Ивановна Андриенко, противникăн вучĕ айĕнче ĕçлесех, çапăçу хирĕнчен аманнă боецсемпе командирсене 19 çынна, вĕсен хĕçпăшалĕсемпе пĕрлех, йăтса тухнă. 6-мĕш класра вĕренекен Костя Хворостянов çапăçу хирĕнчен аманнă 6 боеца, 12 винтовка тата 10 граната çĕклесе тухнă.

Райхаçатсен ĕçĕнчи хăшпĕр опытсем çинчен

Совет халăхĕн отечественнăй вăрçи пĕтĕм пичет ĕçне, çавăнпа пĕрлех районри хаçатсен ĕçне те тĕпрен çĕнетсе урăхлатма хушрĕ. Пирĕн районри хаçатсем, Сталин юлташ панă кăтартусем тăрăх, хăйсен ĕçĕсене çĕнетсе урăхлатаççĕ. Улатăр районĕнчи «Ленинский путь» хаçата илсен, вăл Хĕрлĕ Çара кайнă корреспондентсем вырăнне çĕнĕ корреспондентсене тупса ĕçлеме тытăннă, хаçата районри тĕрлĕ профессипе тата тĕрлĕ специальноçпе ĕçлекен çынсем çырса тăраççĕ, вĕсем хушшинче: производствăри стахановецсем, инженерсемпе техниксем, агрономсем, колхоз председателĕсемпе бригадирсем, врачсем, учительсем, партипе совет\u0103н районри активĕ, чугунçул çинче ĕçлекенсем, комсомол работникĕсем т. ыт. те пур. Вĕсем пурте хаçат урлă хăйсен шухăшĕсемпе ĕçри опычĕсене çырса пĕлтереççĕ. Ку хаçатри умстатьясен тематики те тĕрлĕрен. Вăл профсоюзсен ĕçĕсем çинчен, Улатăр узелĕнчи чугунçул работникĕсен ĕçĕсем çинчен, йĕлтĕрлĕ кросс çинчен, вăрман хатĕрлесси çинчен, колхозра ĕçлекенсен кадрне хатĕрлесси çинчен, ĕççынни депутачĕсем вăрçă вăхăтĕнче мĕнле ĕçлемелли çинчен çырать. Çак вăхăтрах «Ленинский путь» хаçат çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ялти коммунистсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен, колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен тата çуркунне акмалли культурăсен вăрлăхĕсене хатĕрлесе çитересси çинчен те тăтăшах çырса тăрать. Хаçат Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар уявĕ кунĕнче кăларнă приказне çӳтсе-явас ĕç колхозсенче мĕнле пынине те аван çутатса пынă. Çаксем çинчен çырнипе пĕрлех «Ленинский путь» хаçат боецсем фронтран ярса тăракан çырусене тата отечественнăй вăрçăри хăйсен землякĕсем çинчен çырнисене те тăтăшах пичетлесе тăрать. Вăрçă вăхăтĕнче редакцие мĕнпурĕ 800 çыру пынă, вĕсенчен 682 çырăва хаçата кĕртнĕ; ку шутран 40 çырăвĕ фронтран тата Хĕрлĕ Çартан янă çырусем. Хаçата илемлетме тата вырăнти паллă çынсемпе лайăхрах паллаштарма редакци районра туса хатĕрлекен клишесене те кĕртсе тăрать. Хаçат районри стена хаçачĕсене мĕнле ĕçлемелли çинчен кăтартусем парса пырать, стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕсене туса ирттерет. Юлашки вăхăтра хаçат редакцийĕ Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене куллен илсе тăрас ĕçе организацилерĕ. Совет Информаци Бюровĕн паллă пĕлтерĕвĕсене вăл 1000 экземпляр пичетлесе кăларса, районри халăх хушшине салатать. Колхозсем валли çуракки вăхăтĕнче стена хаçачĕсем кăларса тăма 500 экземпляр макет пичетлесе хатĕрленĕ.

Районри пичет ĕçне çĕнетсе урăхлатас тĕлĕшпе Тăвай районĕнчи «Большевикла колхозшăн» хаçат та чылай çитĕнӳсем туни курăнать. Редакци хаçат номерĕсене содержани енĕпе те, техника енĕпе те лайăх кăларма тăрăшать. Çĕршыв оборонине çирĕплетес ыйтусем çинчен, районри колхозниксем Хĕрлĕ Çара пулăшса тăни çинчен, хуçалăхпа политикăллă кампанисем çинчен хаçат номертан номера çырса пырать. Хаçат умстатьисене редакци яланах вырăнти пурнăçпа çыхăнтарса, районри фактсемпе çирĕплетсе çырать. Юлашки икĕ уйăхра хаçат укçа-тенкĕ мобилизацилес, ăш-какай тăратас, государствăна тырă сутас; вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе тата ытти ыйтусемпе те çителĕклĕ çырса пынă. «Большевикла колхозшăн» хаçат Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем чĕнсе каланине ответлесе районри колхозсем мĕн-мĕн туни çинчен те аван çутатса пычĕ.

Çапах та çӳлте кăтартнă хаçатсен, хăйсен ĕçне пĕтĕмĕшпех çĕнетсе çитерес тесен, нумай ĕçлемелле-ха. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Пропагандăпа агитаци управленийĕ кăтартса панă çитменлĕхсем «Ленинский путь» тата «Большевикла колхозшăн» хаçатсенче те чылаях тупăнаççĕ. Ку çитменлĕхсене пĕтерме асăннă хаçатсен редакцийĕсен çине тăрсах ĕçлемелле.

Юлашки вăхăтра хаçат ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе Калинински тата Етĕрне районĕнчи хаçат редакцийĕсем те çине тăрсах тăрăшни курăнать. Калинински район хаçачĕ юлашки 22-мĕшпе 23-мĕш номерсене 16—17-шер статьяпа заметкăсем кĕртсе хаçат содержанине пуянлатнă. Халиччен ку хаçат кашни номера 6—7-шер статья çеç вырнаçтарса пынă. Хаçатăн умстатьисем кĕске тата тулли ăшчиклĕ. Хаçатра колхоз председателĕсем, стахановецсем, бригадирсем, ялсовет председателĕсем, парти пуçламĕш организацисен секретарĕсем, специалистсем т. ыт. те çырма тытăнаççĕ. Етĕрне районĕнчи «Колхозник юлташĕ» хаçат 19-мĕш №-тен пуçласа хăй страницисенче «Хулапа район тăрăх» текен отдел уçнă. Ку отдела вырнаçтаракан материалсем тĕрлĕрен тата интереслă тухаççĕ. Анчах çапах та ку вăл—пуçламĕшĕ çеç-ха. Хаçат содержанине пуянлатас тĕлĕшпе малалла тумаллисем татах та нумай.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ районри хаçатсене пуринчен ытла хаçăпăрхăй районĕнчи пурнăçран илнĕ конкретнăй фактсем çинчен, вырăнти практикăран илнĕ ăнланмалла çывăх ĕçсем çинчен çырма хушать. Çакăнпа пĕрлех вĕсен пĕтĕм Совет Союзĕпе республикăри событисем çинчен те çырса, вĕсем тăрăх районри халăха политикăллă воспитани памалла, халăх массине умра тăракан задачăсем тавра мобилизацилесе çав задачăсене пурнăçа кĕртме организацилемелле. Ку задачăсене пирĕн районри хаçатсенчен нумайĕшĕ начар пурнăçласа пыраççĕ-ха.

Районри хаçатсем отечественнăй вăрçă условийĕсенче хăйсен ĕçĕсене мĕнле туса пынине çӳтсе-явас тĕлĕшпе çак кунсенче республика районĕсенчи хаçат редакторĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура районри хаçатсен ĕç ытычĕсем çинчен Элĕк районĕнчи хаçат редакторĕ Саперкин тата Вăрмар районĕнчи хаçат редакторĕ Степанов юлташсем каласа пачĕç.

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Пивоваров юлташ районри хаçатсен умĕнче тăракан задачăсем çинчен каларĕ. Хăйĕн сăмахĕнче вăл уйрăмăнах районри хаçатсен çуракине хатĕрленнĕ вăхăтра тата ирттернĕ чух мĕнле ĕçлемелли çинчен чарăнса тăчĕ.

Канашлура ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ Ахазов юлташ хăйĕн сăмахĕнче Улатăр, Етĕрне, Калинински районсенчи хаçатсен уйрăм çитĕнĕвĕсене илсе кăтартса, çак хушăрах Шăмăршă, Çĕрпӳ, Элĕк районĕсенчи тата ытти хаçатсен пысăк çитменлĕхĕсене хытă критикăларĕ. Кăтартнă районсенчи хаçатсем хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне кирлĕ пек çĕнетмен, вĕсен страницийĕсем пысăк материалсемпе тулса лараççĕ. Шăмăршă хаçачĕ час-часах ăнланма йывăр, пысăк статьясемпе пичетленсе тухать, çавăнпа унăн содержанийĕ те чухăн. Элĕк, Шăмăршă, Çĕрпӳ хаçачĕсен корреспондентсем сахал, вĕсем корреспондентсен кадрĕсене организацилеме пĕлмеççĕ, çавăнпа вĕсен редакцийĕсене çыракансем те сахал.

Çак çитменлĕхсене райхаçатсен çывăх кунсенчех пĕтерес пулать.

В. ИГНАТЬЕВ.

Май уявĕ ячĕпе кучченеçсем

ЧКАЛОВСКОЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр., телефонпа**). Районри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем валли май уявĕ умĕнхи кучченеçсем хатĕрлеççĕ. Апрелĕн 5-мĕш тĕлне колхозсенчен 18 центнер тиретнĕ ăш-какай, 92 килограмм çу, 76 килограмм пыл, 2740 çăмарта, çу çинче пĕçерсе тиретнĕ 71 хур, 340 чăх, пĕр центнера яхăн тулă çăнăхĕнчен пĕçернĕ премĕксемпе сухарисем, 172 мăшăр носки, махорка тултарнă 405 енчĕк тата ытти япаласем пухăннă.

Кучченеçсене пухас ĕçе уйрăмах «Маяк», Киров тата Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕсем лайăх хутшăннă. «Маяк» колхозран (колхоз председателĕ З. Минаев юлташ) çакăн пек кучченеçсем яраççĕ: 1,5 центнер тиретнĕ ăш-какай, 10 хур, 10 чăх, 10 килограмм пыл, 200 çăмарта, 15 мăшăр носки т. ыт. те. Çавăн пекех Сталин ячĕпе тăракан колхоз та (колхоз председателĕ Капитанова юлташ) 100 килограмм какай, 6 килограмм çу, 6 хур, 18 чăх, 10 мăшăр носки, 300 çăмарта ярать.

Районри ĕççыннисем фронтовиксемпатне кучченеçсемпе пĕрле çыру яраççĕ. Унта вĕсем боецсене хăйсем мĕнле ĕçлени çинчен: районри предприятисемпе колхозсем фронта куллен пулăшса тăни çинчен, красноармеецсен çемйисене пулăшни çинчен çыраççĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

Фашистла оккупантсем совет партизанĕсенчен хăраççĕ

ЖЕНЕВА, апрелĕн 6-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви çапла пĕлтерет: Венгри регенчĕ Хорти Венгри войскисен командующине телеграмма янă, çав телеграммăра совет партизанĕсене хирĕç татăклăн кĕрешме кирли çинчен каланă. Гитлер йытти, вăхăтлăха тытса илнĕ совет территорийĕ çине полицин ирсĕр ĕçĕсене туса пыма Венгри войскисене янăскер, совет партизанĕсем оккупантсене пурнăç памаççĕ тесе йышăнать. Венгри войскисен,—тенĕ телеграммăра, — совет партизанĕсене хирĕç вăйлăн çапăçма тивет. Çав çапăçусем венгерсемшĕн часчасах кĕтмен çĕртен килсе тухаççĕ. Хорти партизансене пула Венгри войскисене апат-çимĕç тăратас тата войскăсемпе çыхăну тытас ĕçре пысăк йывăрлăхсемпе тĕл пулма лекет, тесе палăртать.

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 6-мĕш. (ТАСС). Совет партизанĕсем тата Хĕрлĕ Çарăн нимĕçсен тылĕнчи чаçĕсем хăюллăн кĕрешнипе гитлеровецсене питĕ йывăр килнине гитлеровецсен хаçачĕсем хăйсем те пытараймаççĕ. Нимĕçсен майорĕ Видеркинд «Брюсселер цейтунг» хаçатра тарăхса çапла çырать: «Германи командованийĕ умне час-часах татса памалли ыйтусем тухса тăраççĕ. Приказсем çырса кăларнинчен ним усси те çук. Пур çулсене те пӳлсе лартаççĕ, телеграф провочĕсене татаççĕ, вырăссем вăрттăн çулсемпе кĕрсе Германи салтакĕсен тылне тапăнаççĕ, çавăнпа та мĕн палăртса хунисем пурте пăчлансах пыраççĕ».

«Мюнхенер нейесте Нахрихтен» хаçат çапла çырать: «Совет партизанĕсем, парашютисчĕсем, йĕлтĕрçĕсем, кавалеристсем нимĕçсен тылĕсене пыра-пыра кĕреççĕ, вĕсен кĕрешĕвĕ Германи войскисен командованине калама çук хытă пăшăрхантарать».

«Совет кавалерисчĕсем, çар пурлăхĕсем турттармалли кирлĕрен те кирлĕ çулсем патне çывхарса, сасартăк пирĕн колоннăсем çине тапăнатчĕç. Пĕлтĕрçĕсен отрячĕсем аэродромсем çине, çав аэродромсенче технически персонал кăна юлнă чухне, пыра-пыра тапăнатчĕç. Парашютистсем кĕперсене, чугунçулсене вататчĕç. Инçетри районсенче парашютистсем организациленĕ партизансен отрячĕсем кĕрешетчĕç. Çав отрядсем нимĕçсен обозĕсем çине пыра-пыра тапăнатчĕç. Çак операцисем пире пĕртте канăç паматчĕç. Вĕсем пире фронтăн пур участокĕсенче те хăрататчĕç. Çавнашкал операцисем кашни вăхăтрах сиксе тухма, вĕсем тата вăйлăрах та пулма пултараççĕ-çке. Тыла пырса кĕнĕ совет чаçĕсем ырăн мĕн кăна тăвĕç, çак кас парашютистсем ăçта кăна пырса анĕç ĕнтĕ, тесе эпир куллен пăшăрханаттăмăр, уйрăмăнах обозри чаçсем хăратчĕç».

Гитлеровецсем партизансенчен хăрани пуринчен ытла ак çак сăвăран палăрать. Ăна нимĕçсен лейтенанчĕ Шуман çырнă. Вăл «Берлинер берзенцейтунг» хаçатра пичетленсе тухнă. Унта çапла çырнă:

«Францире эпир юрлаттăмăр,
Российăра шăнса хытрăмăр.

Пирĕн умра пĕр сассăр, шăппăн сехре хăппи утатчĕ. Вăл тăрсан-тăрсан пĕр каялла çаврăнса пăхатчĕ. Чунсăр, тăхлан пек йывăр пĕлĕт пирĕн çире тискеррĕн çакăнса тăратчĕ. Вăл акăш-макăш хăрушă тупăк пек курăнатчĕ. Таврари тискер сасăсене итлесе эпир хурал тăраттăмăр. Пирĕн чĕресем ырататчĕç, эпир пĕр çакна çеç лайăх пĕлсе тăраттăмăр — эпир пĕр пĕччен».

Иранра Совет Союзĕпе тата унăн культурипе интересленеççĕ

ТЕГЕРАН, апрелĕн 7-мĕш. (ТАСС). Иранри халăх Совет Союзĕнчи халăхсен искусствипе тата литературипе вăйлăн интересленет. Советсен политикăллă, художествăллă тата наукăллă литературине питĕ ыйтать. Сталин юлташăн Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче 1941 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă докладне, перс чĕлхипе 6000 экземпляр пичетлесе кăларнăскерне, темиçе кун хушшинчех илсе пĕтернĕ. Совет халăхĕн отечественнăй аслă вăрçинчи чаплă çапăçусем çинчен пысăк интереспа вулаççĕ. Нумаях пулмасть француз чĕлхипе пичетлесе кăларнă кĕнекесене: Шолоховăн «Лăпкă Дон», Катаевăн «Пĕччен ларус шуррăн курăнать», Крыловăн «Дербент танкер» ятлă кĕнекисене, Чуковскин ачасем валли çырнă кĕнекисене, çавăн пекех тата Гогольпе Горькин произведенийĕсене сутма тытăннă, вĕсене пĕрремĕш кунах илсе пĕтернĕ. Паллах ĕнтĕ, вĕсем илес текенсене нумайĕшне çитеймен.

Совет артисчĕсен концерчĕсем Тегеранра тата Иранри ытти хуласенче те çавтери ăнăçлăн иртнĕ. Пĕлтĕр ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче унта таджик филармонийĕ концертсем панă, çав концертсене халăх питĕ нумай çӳренĕ, вĕсем çинчен Иранра тухакан мĕнпур хаçат-журналсенче мухтаса çырнă. Иранра тухса тăракан литература журналĕ «Амаган» таджик артисчĕсен юррисемпе ташшисем иранецсен чĕрисене таран кĕрсе ларчĕç, вĕсене ĕнтĕ нихăçан та манас çук, тесе çырнă. Кăçал февраль уйăхĕнче Тегеранра совет композиторĕ Книппер хутшăннипе концерт пулса иртнĕ. Çав концертра Иран артисчĕсем Книпперăн Тегеранра пулнă чухне çырнă икĕ произведенине выляса панă. Книппер хăй тухса выляние Тегеранри хаçат-журналсем питĕ çӳллĕ вырăна хурса хакланă. Армян ССР-ĕн государство оркестрĕпе Мускаври театрсен артисчĕсен темиçе труппин концерчĕсем те çавăн пекех ăнăçлăн иртнĕ. Вĕсен нумай концерчĕсем пĕр театртах 10—11-шер хут пулса иртнĕ пулсан та, çав театрсен залĕсем яланах тулли пулнă.

Иранри кинотеатрсенче советсен нумай кинокартинисене кăтартнă, çав кинокартинăсене çĕршер пин çын курнă. «Нимĕçсен войскисене Мускав патĕнче аркатса тăкни» ятлă фильма Тегеранра темиçе кун хушшинче вуншар пин çын курнă. Тегеранра нумаях пулмасть «Ленин 1918 çулта» ятлă кинокартинăна кăтартма тытăннă, ăна çынсем питĕ юратса пăхаççĕ.

Иранра тухакан хаçатсем Совет Союзĕнчи пурнăç çинчен, унăн искусствипе культури çинчен нумай статьясем çыраççĕ, çапла туса вĕсем Совет Союзĕпе Иран хушшинчи культурăллă çыхăнусене аталантарса çирĕплетсе пыма пулăшаççĕ.

Выçă Финляндия

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 7-мĕш. (ТАСС). Финляндирен килекен çĕнĕ хыпарсем унта продовольстви тĕлĕшпе лару-тăру вĕçне çитиех çивĕчленсе çитни çинчен калаççĕ. Або хулинче, эрне çитет ĕнтĕ, çăкăр пачах та çук. Хельсинки, Пори тата ытти хуласенче те çăкăр тупса илесси питех те йывăр ĕç. Çĕрулми, пăрçа ниçта та çук, пулă та пулин питĕ сахал.

«Суомен сосиалидемократти» хаçат çак кунсенче пĕр рабочин çыруне пичетлесе кăларнă. Унăн çемьи 6 çынран тăрать. Ку çемье «халăх столовăйĕ» текен столовăйра апатланать. «Кунне пĕрре çисе пырсан, пире уйăхра 2.700 марка кирлĕ пулать. Кĕскерех каласан, хальхи ĕçукçипе пирĕнтен нихăшĕ те кунне иккĕ çиме пултараймасть. Килте пирĕн нимĕнле продуктсем те çук», — тесе çырнă çав рабочи.

Салтак çемйисен пурнăçĕ пуринчен те йывăртарах вара. Çав хаçатрах вăрçă инваличĕн çыруне пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: «Эпĕ хам çемьепе пĕрле шутласан, уйăхра 400 марка кăна илетĕп. Çавăн чухлĕ укçапа мĕнле пурăнмалла-ши?—тесе ыйтать инвалид. — Халь текех ĕçлеме пултарайманшăн эпĕ пĕрре те айăплă мар-çке. Манăн, манăн çемьен те пĕр çул кăна тăрса юлчĕ, вăл —ыйткалама тухса каясси».

«Суомен сосиалидемократти» хаçат апрелĕн 3-мĕшĕнче тухнă номерĕнче çапла пĕлтерет: снабжени оргăнĕсем правительствăна çыру çырса панă. Çав çырура вĕсем çĕршыври лару-тăру вĕçне çитиех çивĕчленсе çитни çине кăтартса панă. Кĕрпе сутма пăрахнă. Хельсинкире нормăсăр тăракан продуктсем пачах та çук. Çырура çакна паллă тунă: продовольстви тĕлĕшпе тухса тăракан йывăрлăхсем халăх шухăш-кăмăлне питех те пăтратса яраççĕ. Çырура тата çакна та астутарнă: Хельсинки хулинче пурăнакан халăх февраль уйăхĕнче çăкăр паекне пачах илмен.

Швецин телеграф агентстви Хельсинкирен пĕлтернĕ тăрăх, пуринчен те ытла ачасене питĕ йывăр тивет. Кунран кунах тăранмалăх çиейменнипе ачасем хушшинче вар чирĕ тата туберкулез питех те вăйлăн сарăлнă.

«Ууси Суоми» хаçат çирĕплетсех каланă тăрăх, Финлянди правительстви спекуляци тума чармасть, пачах урăхла, хăй хĕтĕртсе тăрать. Марка хакĕ тĕлĕнмелле хăвăртлăхпа ӳксе пырать. Инфляци пулса каяссине кĕтсех тăмалла. Финляндири пуян та паллă промышленниксем хăйсен капиталĕсене, правительство чарать пулин те, ютçĕршывсене кусарма тăрăшаççĕ. Швеци кронне вĕсем 30 марка тӳлесе илеççĕ, Америка долларне 110 марка парса илеççĕ.

Англипе де Голль хушшинчи экономикăллă килĕшӳ

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕш (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: ютçĕршыв ĕçĕсен министерстви тата генерал де Голль пĕр çуллăха килĕшӳ тунă. Çав килĕшӳ тăрăх Англипе Францин экваториальнăй Африки хушшинчи суту-илĕве тата экономикăлла çыхăнăва 1942 çулти октябрьччен йĕркелесе тăмалла. Англи правительстви çĕрмамăкĕн пĕтĕм тухăçне (20 пин тонна), çавăн пекех тата пальма çăвне, çĕр мăйăрне тата ытти продуктсене те сутăн илет. Çавăн пекех Англия 2.500 тонна кофе илет, ăна Африкăра тырса усрамалла. Кунсăр пуçне тата Англия уйăхсерен 10.000 тонна вăрман илсе тăрать.

Ирĕклĕ Францин национальнăй комитечĕ çав асăннă продуктсене Англипе килĕштермесĕр урăх нимĕнле çĕршыва та сутмасть. Промышленноçра кирлĕ алмазсем тăшмансен аллине ан лекчĕр тесе, ирĕклĕ Франция вĕсене кама сутассине Англипе канашласа татăлса кăна пурнăçа кĕртсе пымалла.

Германире тата оккупациленĕ çĕршывсенче шатраллă тиф сарăлнă

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 5-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Берн хулинчен çапла пĕлтерет: кунти сведенисем тăрăх, юлашки вăхăтра Берлин районĕнче çĕнĕрен темиçе çĕр çын шатраллă тифпа чирлесе ӳкнине палăртнă. Ерекен чирсем вăйлăн сарăлса пынинчен хăраса ӳксе, Германин влаçĕсем январĕн 1-мĕшĕнчех тиф çинчен пĕлтерекен статистикăллă сведенисене пичетлеме чарса лартнă.

Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, шатраллă тиф Германия оккупациленĕ çĕршывсенче те вăйлăн сарăлса кайнă. Хивельпурти (Голландия) нимĕçсем контроллесе тăракан радиостанци çакăн пек пĕлтернĕ: Польшăн оккупациленĕ территорийĕнче пур пысăк хуласенче те тифа хирĕç прививка тăвассине обязательнăй йĕркепе пурнăçа кĕртме тытăнмалла, мĕншĕн тесен унта çав чир питех те анлăн сарăлнă.

Гитлерăн Кăнтăр-Хĕвелтухăç Европăри вассалĕсем пĕр-пĕрне кышлани

НЬЮ-ЙОРК апрелĕн 7-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Берн хулинчен çапла пĕлтерет: дипломатиллĕ учрежденисен çыннисем каланă тăрăх, Венгрипе Болгария март уйăхĕн пуçламăшĕнче секретлă килĕшӳ тунă. Çав килĕшӳ тăрăх, «хăшпĕр ревизионистла демаршсем» ыйтусене миррĕн татса параймасан, Венгрипе Болгария политика тĕлĕшпе те, вăрçă енĕпе те пĕрле ĕçлеме пулаççĕ. Килĕшӳре çав икĕ çĕршыв Румынирен мĕнле территорисем илме шутланине те çырса хунă.

Договора София хулинче Венгрин генеральнăй штаб начальникĕ фельдмаршал Сомбатхий тата Болгарин çар министрĕ Даскалов алă пуснă.

Корреспондент малалла çапла пĕлтерет: Венгрипе Болгари килĕшĕвĕ çине ответлесе Румыния, Хорватия тата Словакия вăрçă союзĕ тунă. Ку союзăн тĕллевĕ — Венгрин малашнехи экспансине чарса лартасси тата Венгрия тытса илнĕ территорисене каялла тавăрасси. Венгрия, çак союза хирĕçлесе, Берлина тата Рима протест панă.

Берлинри дипломатиллĕ ушкăнсенче çакăн пек хыпарсем çӳреççĕ: Румыния, Хорватия тата Словакия пĕр-пĕринпе союз тăвасси тĕнĕл держависем хĕтĕртнипе пулнă, теççĕ. Çапла майпа Венгрие хытăрах хĕстерме, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне çĕнĕрен войскăсем яма Гитлер панă приказа пурнăçлаттарма пулать, тесе шутлаççĕ тĕнĕл держависем.

Австрия Гитлер ури айĕнче

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 6-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче нимĕçсем çавтери пысăк çухатусем тӳснĕ пирки, Венăра Германи çарĕ валли татах та темиçе хутчен çĕнĕрен мобилизацисем туса ирттернĕ. Унсăр пуçне тата Венăри рабочисене нумайĕшне ватăлса кайнă старциксене те, ватăлма пуçланисене те — Германире ĕçлеттерме илсе тухса кайнă.

Австри халăхĕ гитлерла оккупантсене хирĕç пыракан кĕрешĕве вăйлатсах пырать.

Венăри предприятисенче час-часах саботажсем пулса иртеççĕ. Флорисдорф районĕнчи автомобильсем юсакан «Бревилье» ятлă пысăк заводра пушар тухнă, вутра темиçе çĕр автомашина çунса кайнă. Леопольдау районĕнчи нефть тасатакан заводра паллă мар çынсем тем пысăкĕш нефтехранилищесене шăтарса хăварнă. «Дейч—Ваграм» лагере вут тĕртнĕ, лагерь тĕппипех çунса кайнă.

Вена хальхи вăхăтра пĕтĕмĕшпех выçă хула. Урамсенчи пурнăç пачах пĕтсе ларнă. Магазинсенче нимĕн те çук. Апла пулин те, сутăçсем хăйсен магазинĕсене хупма пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен пушă пулсан та магазинсене хупма юрамасть.

Криппс Индире калаçусем ирттернĕ май

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 6-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Делирен пĕлтернĕ тăрăх, унта Криппс çитес вăхăтрах çĕршывăн обороны тĕлĕшпе конгресс панă ыйтусем çине Англи правительствин ответне конгресса пĕлтерессе кĕтеççĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 6-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Делирен пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 5-мĕшĕнче Джавахарлал Неру Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕн Рузвельтăн Индири личнăй представителĕпе Джонсон полковникпе икĕ сехет çурă хушши калаçнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 6-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Делирен пĕлтернĕ тăрăх, конгресс председателĕ Калам Азад пичет представителĕсене çапла каланă: Неру вăл хăй Рузвельтăн Индири личнăй представителĕпе Джонсон полковникпе калаçни çинчен конгресс исполкомĕн бюровне пĕлтернĕ, тенĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Делирен пĕлтернĕ тăрăх, Криппс вице-король çумĕнчи исполнительнăй совечĕн членĕсемпе Ферозхан Нунпа, Султан Ахмедпа тата Раджавендра Распа тĕл пулнă.

Корреспондент çавăн пекех тата конгресс председателĕ Калам Азад тата Джавахарлал Неру Рузвельтăн личнăй представителĕпе Джонсон полковникпе тĕл пулни çинчен пĕлтерет. Калаçу пĕр сехет хушши пынă.

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Делирен пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельтăн представителĕ Джонсон Калам Азадпа тата Нерупа калаçнă хыççăн Криппс патĕнче канашлура пулнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Делирен пĕлтернĕ тăрăх, конгресăн председателĕ Азад пичет представителĕсене çапла пĕлтернĕ: Криппсран вăл пур ыйтусем тăрăхах тивĕçлĕ ответ илеймен-ха. Çавăнпа та конгресс исполком бюровĕн çитес ларăвне хăçан ирттерессине халĕ палăртса хуман. Бюро Криппсран ответ илнĕ хыççăнах çавна палăртса хурать,—тенĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Аллахабадри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, «Мусульмансен лигин» конференцийĕ йышăннă резолюцире: Инди конституцийĕн ыйтăвĕ тĕлĕшпе йышăннă кирек те епле решенире те мусульмансен тĕп прависене никам та тĕкĕнме пултараймаслăхне палăртма кирли çинчен, лига килĕшмесĕр тата вăл ырламасăр конституци тĕлĕшпе нимĕнле улшăнусем те туса ирттерме юраманни çинчен тепĕр хут каланă.

Англи авиацийĕ Рур çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Рур тата Рейн облаçĕсене вĕçсе пырса тĕрлĕ объектсем çине тапăннă.

Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: апрелĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи çийĕнче противникăн авиацийĕ пулман.

Ютçĕршывсенче

● Дели хулине Рузвельтăн Индири личнăй представителĕ полковник Льюис Джонсон çитнĕ.

● Апрелĕн 2-мĕшĕнче Çурçĕр Норвегири Нарвик хули çинче англичансен 17 самолечĕ вĕçсе çӳренĕ. Çапла шутлаççĕ: ку самолетсем англичансен Норвегин территориальнăй шывĕсен тулашĕнчи инçех мар çӳрекен авианосецĕ çинчен вĕçсе улăхнă пулĕ, теççĕ.

● Апрелĕн 1-мĕшĕнче Стокгольмра Норвеги майлă пулса митинг туса ирттернĕ. Митинга халăх питех те нумай тухнă. Ăна социал-демократсен партийĕ тата халăх партийĕсенче тăракан çамрăксен союзĕсемпе ытти организацисем пĕрле организациленĕ.

● Юлашки эрнесем хушшинче Кипр утравĕ çине Грецирен темиçе çĕр беженец çитнĕ. Вĕсем пурте гитлерла режимăн хăрушлăхĕнчен хăтăлас шутпа тăван кил-çурчĕсенчен тарса тухнă. Кипр утравне вĕсем пуринчен ытла кĕсменпе ишмелли кимĕсем çине ларса с парăслă суднăсемпе çитнĕ.

Францин Çурçĕр Африкинчи террор

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕш. (ТАСС). Мароккора тухса тăракан «Депеш Марокэн» ятлă хаçат çапла пĕлтерет: ятарласа тунă суд Çурçĕр Африкăри темиçе вунă деятеле, фашистсене хирĕç ĕçленĕшĕн, хăшĕсене асапλантарса вĕлермелле, теприсене каторгăна ямалла тата тĕрмене хупмалла туса приговорсем йышăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

С 8 апреля работа
БАНИ
организуется в две смены: с 7 часов утра до 1 часа ночи.
Для профилактического ремонта и дезинфекции устанавливается общий выходной день по понедельникам

Чувашской Республиканской Конторе
ГЛАВНЕФТЕСБЫТА
ТРЕБУЮТСЯ
на постоянную работу: старший плановик, юрис-консульт, нач. инспекции, нач. охраны и ПВО, сторож-уборщица.
За справками обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Байдукова, дом № 8, отдел кадров.
Телефон 3—83.

Чебоксарской электростанции
ТРЕБУЮТСЯ:
инженеры-водопроводчики, машинисты-дизелисты, смазчики, слесаря, слесаря-водопроводчики, электромонтеры, чернорабочие и уборщицы.
Адрес: ул. Чувашская, гор. Волосвета, контора. Отдел кадров, тел. 3—8, 1—28

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—65, издательстви — 0—[illegible], пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн [illegible]

НТ 1040 Гор. Чебоксары, типографи № 1 управлении полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: м: